Х-67
Ч-41156

Анатолий Хмыт

# ВИЛӖМСӖР КӐЙКӐР ЮРРИ



Национальная библиотека ЧР
4-041156

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ

обозначенного здесь срока

М т 3 3835 Т 5000 1989г

Анатолий Хмыт

# Вилĕмсĕр кăйкăр юрри

Повесть

Шупашкар - 2002

УДК 821.512.111
ББК 84(2 Рос-Чув)- 4
Х 67

Анатолий Хмыт (Ефимов Анатолий Дмитриевич) - талантливый чувашский писатель, живет и работает в Чебоксарах в должности заместителя директора по воспитательной части школы №18.

Родился и вырос в Чувашском селении Тарханка Аксубаевского района Республики Татарстан. Воин-интернационалист, участник военных действий в Афганистане, которые оставили неизгладимый след в душе у будущего писателя. Все лучшие произведения он посвятил этой теме.

Главный герой новой повести А.Хмыта воин-интернационалист, чувашский парень Женя Трилинский, уроженец г.Чебоксары. С душевной теплотой и талантом одаренного писателя раскрывает он прекрасную жизнь, героический подвиг и трагическую гибель своего друга воина-итернационалиста, именем которого впоследствии названа целая улица в Чебоксарах.

Повесть рекомендована к печати правлением Союза чувашских писателей.

ПРОВЕРЕНО
20__

Анатолий Хмыт
(Ефимов Анатолий Дмитриевич)

**Песня бессмертного сокола**
Повесть
На чувашском языке

Редактор М.Н.Юхма
Художественный и технический редактор Г.Г.Ларионова

Книга подготовлена в издательском отделе Всечувашского общественно-культурного центра.
ЛР №030267 от 07 мая 1997г.
Индекс 78352 Тираж 1000 экз.

© *Всечувашский общественно-культурный центр*

Ч-41156
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

# *ВИЛĔМСĔР КĂЙКĂР ЮРРИ*

*(Повесть)*

Шартлама хĕл иртсе кайрĕ. Пурнăç таппипе ăмăртса таçта васкарĕ вăл. Вараланма ĕлкĕреймен шурă кун листисем, халĕ чĕрçи çинче выртакан кĕнекене автобус уçă чӳречинчен вирхĕнсе кĕрекен çил вĕлкĕштернĕн, васкаварлăн уçăла-уçăла хупăнчĕç. Сиссе те юлаймарăм - çур кунĕсем çитрĕç.Акă çутă хĕвел хăйĕн çутă шевлисемпе паян урамра кĕтнĕ хăна. Уншăн пурте хавас: урамсем тăрăх алхасса чупакан ача-пăча та, пахчасемпе уйсенче çанна тавăрса ĕçлекен çынсем те, чĕрчунсемпе ӳсентăрансем те. Ара, епле чăтас-ха савăнмасăр! Тĕнче чĕрĕлет-çке.

Çĕкленӳллĕ туйăмпа Шупашкара çитрĕм. Тăван Чăваш Республикине çулталăкра пĕрре килсе кайма май пурришĕн хĕпĕртесе автобус çинчен антăм. Çĕнтерӳ уявĕпе саламласа çырнă плакатсемпе тĕрлĕ тĕслĕ лавсем çумĕпе иртсе Чапаев скверĕ еннелле утрăм: унта мана Афганистанра службăра пĕрле тăнă тусăмсем кĕтсе тăмалла.

Аслă Аттелĕх вăрçин ветеранĕсемпе çĕршыври халăхсем çĕнтерӳ кунне уявланă чух эпир, акă ĕнтĕ темиçе çул хушши тăтăшах, пĕрле пуçтарăнса шăкăл-шăкăл калаçса иртнине аса илетпĕр, хамăр хушăмăра тухайман юлташăмăрсене асăнатпăр. Шăп та лăп çак кун, 1984 çул пирĕн иккĕмĕш рота душмансем хатĕрлесе хунă капкăна çакланчĕ. Пĕрремĕш взвод пуçĕпех пĕтрĕ. Эпир, сывă юлнисем, паян акă скверта пуçтарăнма калаçса татăлтăмăр. Унта васкатăп: пур-çук лакăмсене те асăрхамастăп, тăрăнатăрăна утатăп...

Çĕркаç çанталăк çĕрĕпе улаттарса йĕчĕ пулин те кăнтăр тĕлне çумăр йĕрĕ юлман та. Унта та кунта хĕвел пайăркипе выляса ялтăртатса выратакан асфальт çинчи шыв кӳленчĕкĕсем çеç халĕ ун çинчен аса илтереççĕ. Вĕлт! вĕлт!-теççĕ те куçа пырса тăрăнаççĕ, утма чăрмантарса вĕсене йăмăхтараççĕ.

-Акă, «тутар душманĕ» те çитрĕ! - янăратрĕ касăр сăмсине кăштах хĕретме ĕлкĕрнĕ лутра пÿллĕ Гена. -Хабасти бача*!

Вăрттăн çывхарасси пулмарĕ иккен.

-Салам! - савăннăран аякранах кăшкăртăм эпĕ те.

-Тутар тутарах çав. Салампа çеç перет,- витлешсе илчĕ Володя, туйипе сывлăша чышса. -Эс мĕн, паян çеç çитрĕн-им?

-Çапла. Хусанта, аппа патĕнче çĕр касрăм та, пĕрремĕш автобуспах юхрăм вара, - алă парса ăнлантартăм тусăмсене. -Çав териех кĕттертĕм-и вара?

-Çук, - терĕ Саня сарă çÿçне катăк турапа якатнă май, -Медальсем ăçта вара санăн?

-Ăçта пултăр ĕнтĕ унăн. Яланхи пекех кĕсйере! Именет вăл пирĕн, тутар чăвашĕ, - терĕ те Володя пиншак кĕсйине хыпашласа илчĕ, - Çакса яр. Вăрламан вĕт.

Медальсене кăларса кăкăр çине çакмах тиврĕ.

-Пурте килнĕ-и вара? -йĕри-тавра пăхкаласа ыйтрăм.

-Женя çук, Александров. Вăрнар каччи.

-Ăçта вара вăл. Авланма шут тытман пулĕ те?

-Çук. Больницăра выртать, кардиологи центрĕнче. Чĕри çумĕнчи граната ванчăкĕ тапраннă, -хаш сывласа каларĕ Гера. Пурте шăпланчĕç. Ахăртнех Панджерти çапăçăва аса илчĕç пулас. Шăп çав çапăçура Александрова граната ванчăкĕ пырса тăрăнчĕ. Вилет те пуль тенĕччĕ, çук, эсрел аллинчен вăл хăтăлчĕ-хăтăлчех. Шур халатлă ĕçченсем граната ванчăкĕсене пĕррĕн-пĕррĕн кăларса илсе Женя кăкăрне тасатса сиплерĕç. Вилме выртнă çыннăн сулахай ÿпкине пĕтĕмпех касса илчĕç пулин те, ура çине тăратрĕç. Юлашки ванчăкне çеç, чи пĕчĕкскерне, епле тăрмăшсан та чĕре çумĕнчи мышца тĕртĕмĕнчен хăпăтаймарĕç вĕсем. Араскала шанса çеç госпитальтен кăларчĕç.

-Ун патне кĕрсе тухатпăр-и вара? -шăплăха пăсса чĕнтĕм эпĕ.

-Паллах, - терĕç те ачасем ура çине тăчĕç.

-Яланхи пекех, - команда панă пек калаарĕ Саня Ко-

---

Хабасти бача* - сывă-и, тусăм

ропков старшина, сулахай татăк аллине çурăм хыçне пытарса. -Малтан масар çине, унта чечексем хуратпăр та асăнса çĕршер грамм ĕçĕпĕр. Кайран вара Женя патне анăпăр. Унтан - залива...

Пурте саланса пĕтрĕç: кам килĕсене, кам çемьисемпе Атăл хĕррине кайрĕç. Эпĕ çеç, Женьăпа уйрăлма васкамарăм-ха - больница паркĕнчи сак çинче чылаях лартăмăр. Те чĕре тунсăха туйнăран, те тĕлпулу çулталăкра пĕрре çеç пулнăран, манăн унпа калаçас килчĕ: сăмах çăмхи сӳтĕлчĕ те сӳтĕлчĕ - иртни çинчен те, хальхи пирки те, пуласси çинчен те.

-Атя çавăнталла кайса килер, - терĕ Женя сак çинчен тăнă май, -ларса урасем хытрĕç.

Калиткерен тухса сылтăма пăрăнтăмăр. Таса, тин çеç туса лартнă тротуарпа кăмпа пек шăтса ларма ĕлкĕрнĕ çуртсем çумĕпе çырма енне утрăмăр.

-Ку тата мĕнле урам? - кăсăкланмасăр чăтаймарăм эпĕ пĕринчен тепри чаплăрах та çӳллĕрех коттеджсене пĕрремĕш хут курнăран.

-Женя Трилинский урамĕ. Пирĕн пекех афганец вăл. 1989 çулта хăй çуралнă кун пуçне хучĕ. Эпĕ ăна питĕ лайăх пĕлеттĕм...

-Ăçта тăнă вара вăл?

-Астăватăн-и, 1983 çул Афганистана пĕр полк кĕчĕ. Панджирта çапăçнă чух, - кĕсйинчен сигарет кăларчĕ те тивертсе ячĕ.

-Джабаль хулинче тăракан полк-и?

-Çапла. Шăп çав полкра службăра тăнă вăл. Афганистана та хăйĕн ирĕкĕпех кайнă, - тусăм калаçма чарăнчĕ те шухăша путрĕ; пĕртен пĕр сылтăм ӳпкипе тĕтĕме сăвăрасăвăра илет те иксĕлми техĕмпе тулнă çурхи сывлăша пăсса мăкăрлантарать.

Аякра тĕрлĕ тĕспе ялкăшса салют çиçĕне пуçларĕ. Тавраш илемлетсе яр! тăвать те пăчăртата-пăчăртата сӳнет: çĕршыв Çĕнтерӳ кунне уявлать.

-Пирĕн Çĕнтерӳ кунĕ нихăçан та пулас çук, -терĕ Женя ялтăрккасем çинчен куçне илмесĕр.

-Тĕрĕсех. -килĕшрĕм эпĕ те тусăмпа, -Пирĕн асаттесем хăйсем мĕншĕн çапăçса пуçĕсене хунине аван пĕлнĕ. Эпир вара…

-Темле çав, -Женя малалла уттарнă май калаçăва каллех Трилинский çине куçарчĕ. Эпĕ сăмах чĕнмесĕр итлерĕм. -Женьăна лайăх пĕлетĕп. Каласа парам-ха.

1.

- Анне, анне тетĕп, кил-ха хăвăртрах, - кресло çине канлĕн вырнаçса ларнă Таньăн çепĕç те янăравлă сасси шăплăха кисрентерчĕ.

Янк! сикрĕ кухньăри Лидия Николаевна: алăри чашăк çĕре ӳксе чăл-пар саланчĕ, урисем вăйсăрланчĕç, çан-çурăм майĕпен шуса çывăхри пукан çине тĕшĕрĕлчĕ, алăри çĕтĕк татăкĕ çĕрелле вĕлкĕшсе анчĕ, ванчăксене тирпейлĕн витсе хучĕ. Чĕри, тем пулнăн, тăпăртатса пуçларĕ. Хурлăхпа тулнă хура-хăмăр куçĕсем çинче чунран шăранса тухнă асаппа тунсăх мерченĕсем вĕлтлетсе илчĕç. Сывлăша пӳлчĕç.

Çапла. Яланах правур та тăп-тап çӳрекенскер юлашки вăхăтра вăл хавшаса айванланчĕ. Нимрен-çукран шиклене, хăра пуçларĕ. Урамра пĕр-пĕр салтака е офицера ăнсăртран тĕл пулсан - чĕри çурăлса тухма та хатĕр вара. Кăлт! та кăлт! тапать теме кĕтсе. Тен, çавăнпах та пуль сăн-питрен те пайтах улшăнчĕ Лидия Николаевна. Ун çинче текех хĕвел шевли вылямасть. Вăл тĕксĕмленсе ăмăрланчĕ. Тутисем ăшă кулă тĕшшине çухатрĕç. Çурла пек илемлĕн авăнса тăракан йĕпкĕн хура куçхаршийĕсем çумне вара ĕмĕрлĕхех ватлăха палăртакан йĕрсем тухса выртрĕç. Куçĕсем те, пурнăç техĕмĕпе ялкăшса тăракан куçĕсем, таçта çын курман, пĕлмен тĕпсĕрлĕхе путнă. Ăна ачасем те асăрхарĕç паян. Уроксем хыççăн Миша, сăпайлă та ырă кăмăллă ача, сĕтел патне пырса тăчĕ те:

- Эсир чирлетӗр-им, Лидия Николаевна? - куҫран тӗллесе пӑхрӗ.

- Ҫук, - суйма пӑхрӗ учитель. - Мӗншӗн ун пек калатӑн?

- Ара, куҫ шӑрҫисем хӗрелсе тухнӑ-ҫке. Пӗртте сывӑ ҫынӑнни пек мар. Чирлетӗрех эсир Лидия Николаевна. Сирӗн паянах врач патне каймалла. Унсӑрӑн... - каласа пӗтерейменрӗ Миша хӑйӗн сӑмахӗсене. Ӑна учитель ҫупӑрларӗ те пуҫӗнчен чуптуса илчӗ. Умра виҫҫӗмӗш класс ачи Миша мар, тӑван тӗпренчӗк - Женя тӑнӑн туйӑнчӗ ӑна. Ара, вӑл та пӗрре ҫеҫ мар амӑш сывлӑхӗшӗн хӗпӗртенӗ, ҫуннӑ. Каҫсерен, эмел ӗҫме тӑрсан, тем пек шӑп ҫӳресен те вӑранатчӗ ывӑлӗ:

- Анне! Мӗскер пулчӗ сана? Каллех ыратать-и?

- Ҫывӑр, ывӑлӑм, ҫывӑр, эмел ӗҫсенех иртсе кайӗ, акӑ.

Чӑн та ҫӑмӑлланатчӗ: те эмелӗнчен, те пурне те асӑрхаса тӑракан тӗпренчӗкӗн ырӑ сӑмахӗсенчен. Ӑнланаймастчӗ. Акӑ халӗ те, ҫич ютра пулин те Лидия Николаевна ҫинчен манмасть вӑл. Ҫыру ҫырсах тӑрать. Унта пулсан та амӑшне ахальшӗнех ҫунса пурӑнма хушмасть: "Аннеҫӗм, эсӗ вӗҫӗмсӗр манӑн сывлӑх пирки пӑшӑрханатӑн. Хуйхӑрма та, пӑлханма та кирлӗ мар - эпӗ лайӑх сывлӑхпа ҫӳретӗп. Хӑвӑр ан чирлӗр, сывӑ пурӑнӑр", - тет. Мӗнле ҫунмӗ-ха амӑшӗн чӗри? Мӗнле чӑтӗ?

Пуҫа ӗнер мӑшӑрӗн шӑлавар кӗсйинчен тухса ӳкнӗ ывӑлӗн ҫырӑвӗн йӗркисем аса килчӗҫ. "Атте, эпӗ сан пата кӑна хамӑн служба ҫинчен тӗплӗнрех ҫырса пӗлтерме пултаратӑп, ҫавӑнпа та ан тӗлӗн, ан хумхан. Эпир иксӗмӗр те арҫынсем, ҫавӑнпа та сан умра пытармалла мар пуль. Халӗ эпӗ госпитальте выртатӑп. Иртнӗ эрне кун душмансем автоматсенчен персе тӑракан лару-тӑрӑва лекме тиврӗ, шӑпах ҫакӑнта уraран амантрӗҫ. Турра шӗкӗр - пурте йӗркеллех: пуля чӗркуҫҫинчен аяларах мышцӑ тӗртӗмӗ витӗр тухса кайнӑ, юрать-ха шӑмӑсене ватман. Нимех те мар - часах тӳрленет", - йӑпатать юлашкинчен ывӑлӗ. Анчах та мӗнле лӑплантарсан та, амӑшӗн чӗри вутпа ҫулӑм айне

путрĕ. Канăҫа ҫухатрĕ. Ҫĕрĕпе куҫ хупмарĕ вара: вуларĕ те - йĕчĕ, йĕчĕ те - вуларĕ тĕпренчĕкĕ ҫырнă йĕркесене. Ҫавăнпах паян унăн куҫĕсем шыҫăнса кайнă, путса кĕнĕ. Ҫавăнпах, ывăлĕшĕн хуйхăрсах.

Пӳлĕме яштака пӳллĕ, тăп-тăп кĕлеткеллĕ вунултă ҫулхи хĕрĕ Таня чупса кĕчĕ.

- Анне тетĕп, ать... - калас сăмаха вĕҫлеймерĕ вăл. Уҫнă ҫăвара хупмасăр амăшĕ ҫине тилмĕрчĕ. Ҫаврака, илемлĕ куҫĕсене чарса пăрахрĕ. Хăраса ӳкрĕ: амăшĕн хура ҫӳҫĕ ҫинче шуралса кăвакарнă пайăрсем асăрхарĕ.

- Анне, мĕн пулчĕ сана? - хĕрĕ шăппăн утса пычĕ те ыталаса илчĕ.

- Акă, - терĕ Лидия Николаевна, - Женя тăххăрмĕш класра бокспа выляса илнĕ чашăка ҫĕмĕртĕм... Ырра мар пуль ку.

- Темех мар анне. Пичче салтакран килсен пĕрре ҫеҫ мар выляса илĕ-ха ун пек чашăксем, - хăй ҫав вăхăтра аллисемпе амăшĕн ҫӳҫне тăпаларĕ, тин ҫеҫ шуралнă пайăрсене хуплама пикенчĕ. Ăнланаймарĕ ҫав ҫамрăкскер - чĕрери хуйхăна нимĕнпе те витеймăн, пытараймăн.

- Анне, телевизорпа Афганистан ҫинчен калаҫҫĕ. Пичче службăра тăракан хулана та асăнчĕҫ, - терĕ хĕрĕ.

- Джабаль-и? - хуйхăпа тулнă амăшĕн куҫĕсем ҫиҫсе илчĕҫ.

- Ҫапла.

Лидия Николаевнăн пĕр самантлăха та пулин ывăлĕ тăракан вырăна ҫитсе унпа пĕрле пуласси килчĕ. Унти ҫынсемпе курнăҫса калаҫсан та юрĕччĕ те. Анчах та...

Экран ҫинче диктор совет салтакĕсем аякри кишлака Чарнистака апат-ҫимĕҫ турттарса килни ҫинчен пĕлтерет. Акă вĕсем дехкансене ҫăкăр, консервăсем, чей, сахăр валеҫеҫҫĕ. Пурте телейлĕ, савăнăҫлă. Пурте хĕпĕртеҫҫĕ. Вăрҫă пымасть те тейĕн.

Таня куҫа илмесĕр пăхать. Шухăшпа та, чунпа та вăл салтаксем хушшинче. Унта пиччĕшне шырать. Пĕрин хыҫҫăн теприне куҫран тирĕнет: "Эсĕ ман пиччене, Женя

Трилинскине, тĕл пулман-и? Эсĕ те курман-и ăна? Эсĕ вара..." Çук. Чĕнмеççĕ лешсем. Илтмеççĕ ăна.

Лидия Николаевна вара сылтăм алли çине пуçне тайнă та шухăша путнă. Телевизор мĕн çинчен ăнлантарнине тăнламасть те тейĕн. Те чăн та илтмест, те ĕненмест амăшĕн чĕри ăна. Пуçра çав-çавах ывăлĕн сăмахĕсем янăраççĕ, канăç памаççĕ: "Афганистан... аннене ан пĕлтер... аманнă... аманнă..." Мĕнле-ши ĕнтĕ вăл унта? Ури сипленнĕ-ши?

Ах, амăшĕн чĕри! Епле чăтса ирттерĕ-ши вăл çак уйрăлăва. Малтан та сывах марччĕ те. Халĕ вара - пушшех.

2.

Пурăнан пурнăçра тем те курма тивет çав: ыррине те, начаррине те. Уйрăмах - Афганистанра. Кунта вăл кашни утăмрах. Шырама та кирлĕ мар. Хăех тупать. Ăраскаллă пулсан - ыррине, çук тăк - ан та кĕт. Акă Союзран хăйĕн ирĕкĕпе килни уйăх та иртмерĕ - аманчĕ чăваш каччи, Женя Трилинский. Малалла пурнăç тата ăна валли мĕн хатĕрлесе хунă-ши? Кам пĕлĕ? Турри ăçта-ши? Ыйтасчĕ.

Полк Джабаль ус-Сираджран тухса Саланг енне çул тытрĕ. Колонна таçта çити тăсăлать. Вĕçĕ-хĕрри те курăнмасть. Майĕпен, васкамасăр, малалла шăвать. Халĕ эпир çўлте, янкăр тўпере вĕçсе иртекен кăйкăр вырăнĕнче. Ун куçĕпе тимлетпĕр. Сăнатпăр. Чăн та, аякран пăхсан пĕрпĕр хаяр çĕлен евĕр курăнать пирĕн полк. Тўрем вырăнти хăмăш, тусем хушшипе сĕрлесе пырать вăл. Кирлĕ тĕк - сăхса илме те ўркенмĕ. Çулне пўль çеç. Хаяр унăн сăнни. Шутсăр хаяр.

Паян вĕсен Гульбахара çитмелле. Ыран - Панджера. Унта Ахмад Шах Масуд хăйĕн çарĕпе иртĕхет. Ăна лăплантармалла. Ыран-паян - хаяр çапăçу пуçланать. Çавăнпа та полк командирĕ Ярусов полковник çамрăксене илме хушмарĕ... "Вĕсем кунта та кирлĕ", - терĕ. Анчах та...

Женя, акă паян, ытти ачасемпе пĕрле БМП çинче ларса пырать. Вăл полкра юлас темерĕ. Рота командирне ўкĕте кĕртрĕ. Хăйĕн кăмăлне тултарчĕ: малти ретре пычĕ.

Туйăм çĕкленӳллĕ. Чунра хавас. Алăри автомата халь тесен халь хута яма хатĕр. Вара кăтартĕ чăваш каччи хăй мĕнлине. "Сыхланăр, духсем, тарăр! Эпĕ пыратăп!" - кăшкăрасси килчĕ унăн. Кукашшĕ, Николай Ильич Ильин, аслă вăрçă хирĕнче паттăррăн çапăçса пуçне хунă. Ашшĕ-амăш ятне яман. Вăл та, çамрăк чăваш каччи, аслинчен юлмĕ. Хастаррăн çапăçĕ. Чăваш ятне ӳкермĕ.

Çулăн икĕ айккипе çарала пуçланă йывăççем, сарăхнă хăмăш сарăлса выртать. Унта та кунта шывпа витĕннĕ рис анисем палăраççĕ, алтса тунă юханшывсем, арыксем шăнкăртатса выртаççĕ. Хĕвел çути айĕнче йăлтăр-ялтăр вĕлтлетеççĕ вĕсем. Хăйсем патне илĕртсе. Çывăхри хăшпĕр кишлаксенче çын хĕвĕшет: тем аппаланать, тем ĕçлет. Авă пĕри вăкăра кӳлсе лартнă та - суха тăвать. Тĕлĕнмелле: пĕрисем космоса вĕçеççĕ, теприсем вара вунвиççĕмĕш ĕмĕрте пурăнаççĕ; вăкăрсемпе суха тăваççĕ, арпапа тырă турттараççĕ, тăпачăпа çапаççĕ. Техника мĕнне пĕлмеççĕ те тейĕн.

Женьăн кăмăл-туйăмĕ татах та хăпартланса хавасланчĕ. Ара, вăл çак чухăнсене хӳтĕлеме килнĕ-çке паян!

Ту çывăхне пынăçемĕн çулăн икĕ айккипе мина çине лексе ваннă, çуннă машинăсем, БТРсем, танксем пĕрин хыççăн тепри, умлăн-хыçлăн ĕмĕрлехи канăва выртнă. Мĕн чухлĕ тимĕр-тăмăр, мĕн чухлĕ чуна илсе кайнă-ши вĕсем? Кам калĕ? Кам пĕлĕ ăна? Хăрушă: пăхма та, ыйтма та.

Женя усал шухăшсенчен тасалас тесе, аякра, кăвак тӳпе çийĕнче, палăрса тăракан шупка ту енне пăхрĕ. Ун илемĕпе киленчĕ. Чăн та хитре курăнать. Шутсăр хитре. Тилмĕрсе пăхмасан пĕлĕт выранне те хума пулать ăна. Аял пайĕ, сывлăш айне путнăскер, курăнмасть те-çке. Миçе çухрăмра ларать-ши? Пĕлесчĕ.

- Пĕр çирĕм, çирĕм пилĕк çухрăм пур пуль кунтан, - Трилинский шухăшне курса тăнăн, хулран тĕксе хуравларĕ çумра ларса пыракан Гена Сорокин. - Чăн та илемлĕ вĕт.

- Çапла, пулĕ те, - иккĕленсе пĕлтерчĕ Евгений.

- Сакăр вунă ултă çухрăмра вырнаçнă вăл, - калаçăва хутшăнчĕ люк çумĕнче ларса выракан Вова Поляков сержант. Хăй вăхăтĕнче "Паттăрлăхшăн" медале илме тивĕçнĕскер.

- Эсир ту çине мар, ав çавăнталла лайăхрах тимлĕр, - аллине сылтăмра сарăлса выртакан хăмăшсем еннелле кăтартрĕ. - Унта хăрушлăх. Пĕр-пĕр духĕ çамкăрсенчен тĕллерĕ те пуль ĕнтĕ. Асăрханăр, - хăратма пăхрĕ Воронеж каччи.

Умра таврана кисретсе тем кĕрслетрĕ: пĕрре, иккĕ... Колонна чарăнчĕ. Унтан та кунтан кăшкăрашни, пени илтĕне пуçларĕ. Броня çинче пульăсем çумăр çунăн пĕрин хыççăн тепри çатлата çатлата çан-çурăма çӳçентерсе илчĕç. Чун шырарӗç. Ана-кăна ăнкарма, ĕненме ĕлкĕреймен салтаксем ун-кун пăхкаларĕç, сержант мĕн каласса кĕтрĕç.

- Духсем! Пурте машина çумне. Стрелок, пушкă патне! - команда пачĕ те Вова çул çумĕнчи вара чăмрĕ.

Женя та, çӳллĕ те патвар клеткеллĕ чăваш ачи, унран юласшăн марччĕ, анчах та сиксе аннă-анман такăнса ӳкрĕ, сылтăм ури тĕме тăрăнчĕ. Лакăм патне вара вăл уксахла-уксахла чупрĕ. Гена çумне пырса выртрĕ те автоматне хатĕрлерĕ.

- Аçтан переççĕ вĕсем? - ыйтрĕ ту енне тинкерсе.

- Мур пĕлет-и? Ахальтен духсем темен ĕнтĕ. Ав, сăрт çинче дувал куратăн-и? Ахăртнех çавăнтан. Шартлаттар, шеллесе ан тăр.

Чăн та, тепĕртакран çамрăк салтак дувалтан вут сирпĕннине асăрхарĕ. Асăрхарĕ те - автоматне шеллемерĕ вара. Чашăлтаттарчĕ çеç. Харсăр, чунран тухакан çилĕпе печĕ вăл.

Çапăçу хĕрсе пычĕ. Халĕ автомат, винтовка, пулемет сасси çеç мар, "шилка", танк кĕрлет. Çӳлте "вертушкăсем" явăнаççĕ. Вĕсем ту енне пĕлле-тĕлле ракетăсем вĕçтереççĕ. Янăрать, кĕрлет тавра: хаяр çапăçу пырать.

Паçăр ыраттарнă ура йĕпенсе йăлмакаланчĕ. Шăлавар ура çумне çыпçăнать. Сылтăм пĕçĕ çывăра пуçларĕ. Три-

линскине пеме кансёрлерё. Меллёрех майлашӑнса выртас тесе хускалма пӑхрӗ. Яш! турӗ ури.

- Эй, эсремет! - вӑрҫса илчӗ вӑл.

- Мӗн пулчӗ? - ҫамрӑк салтак йынӑшнине илтсен ыйтрӗ душмансене канӑҫ памасӑр сержант.

- БМП ҫинчен сикнӗ чух урана ыраттартӑм, - хураварӗ мӗн ачаран нӑйкӑшма юратман Евгений ҫамки ҫине тапса тухнӑ тарне сылтӑм ҫаннипе сӑтӑрса.

- Ген, пӑхсам, мӗскер унӑн, - хушрӗ сержант кӳршӗри Сорокина.

Унччен те пулмарӗ, Гена кӑвак куҫӗсене чарса:

- Сержант юлташ, Трилинскине уринчен лектернӗ! - тесе кӑшкӑрчӗ.

- Ыраттартӑм ҫеҫ! - хӑйӗнпе мӗскер сиксе тухнине ӗненмесӗр хӑраса та тӗлӗнсе хирӗҫлерӗ Женя. - Сикнӗ чух, - ӳкете кӗчӗ вӑл малалла, тӑшманпа ҫапӑҫма чарӑнмасӑр.

- Петрянкин! - илтӗнчӗ колонна вӗҫӗнчен сасӑ. - Трилинскине пулӑшу кирлӗ! Хӑвӑртрах!

Тепӗр самантра Женя ҫумне лутрарах пӳллӗ, хӗрлӗ ҫӳҫлӗ, тӳпе пек сенкер куҫлӑ салтак килсе выртрӗ. Петрянкин - медбрат.

- Мӗскер унта? - ыйтрӗ вӑл тӳрех.

- Урана ыраттартӑм, - ҫав-ҫавах ӗненмерӗ аманнӑ салтак.

- Вӑйлах ыраттарнӑ вара эсӗ уруна. Витӗрех. Юратьха шӑммине лектермен, - терӗ Петрянкин ҫӗҫӗпе шӑлавар пӗҫҫине ҫурнӑ хыҫҫӑн.

Сумкӑран бинтсем кӑларса сурана чӗркерӗ. Укол турӗ.

- Пӗрремӗш ҫапӑҫу-им? - ыйтрӗ чӑтӑмлӑн кӗтсе выртакан салтакран хӑмӑр куҫӗсенчен пӑхса Петрянкин.

- Пӗрремӗш...

- Ӑҫтисем вара эсӗ?

- Шупашкартан, - юнланнӑ шӑлавар пӗҫҫине тӳрлетсе хуравларӗ чӑваш ачи.

- Апла ентешсем. Эпӗ - тутартан, чӑваш, - терӗ те шӑхӑра-

кан пульăсем хушшипе колонна тепĕр енне вĕстерчĕ. Унта такам аманнă. Чĕнеççĕ. Петрянкина - тутар чăвашне.

Çапăçу вĕçленнĕ çĕре Женьăн ури шыçса кӳпчесе кайрĕ. Хускалми пулчĕ.

- Ай-уй, ытла та патвар ку салтак. Епле йăтса çитерĕр, - тĕлĕнчĕ килсе çитнĕ прапорщик айлăмра выртакан каччă çине пăхса.

- Эпĕ хамах. Пулăшăр çеç, - терĕ те Трилинский тăма пикенчĕ. Салтаксем чупса пырса хулсенчен çавăтса илчĕç. Çывăхра тăракан "Таблетка"* патне илсе кайрĕç.

Евгений шурă шăлĕсемпе, сас каларас мартан, амăшĕ, юратнă амăшĕ, парнеленĕ илемлĕ тутине çыртса хăрах ури çинче сиккелесе пычĕ. "Мĕнле-ха капла, çапăçса та ĕлкĕреймерĕм-çке", - вĕлтлетрĕç унăн пуçĕнче шухăшсем. "Анне... аннене мĕнле пĕлтерес тата. Çук... Юрамасть... Юрамасть çунтарма унăн чĕрине. Ахаль те канăç тупаймасть пуль".

Женьăна носилкă çине вырттарчĕç. Çумра тепĕр салтак. Салтак мар - сержант. Унăн сăнĕ Трилинскине такама аса илтерчĕ.

Уйрăмах - çӳçĕ. Анчах та шупкаланса кăвакарнă, юнпа вараланнă сăн-пите вăл тӳрех палласа илеймерĕ.

- Унăн суранĕсене мĕншĕн çыхман вара? - ыйтмасăр чăтаймарĕ Женя.

- Усси çук. Вилнĕ вăл, - касса татрĕ фельдшер.

Трилинскине прапорщик сăмахĕсем çӳçентерсе ячĕç. Çамка çине тар тапса тухрĕ. Вăл сержант çине тепĕр хут пăхрĕ. Куçсем, броня ăшĕнчи сĕмлĕхре, хĕрлĕ çӳç пайăркисем хушшинчи пĕр пĕчĕк пăнча асăрхарĕç. Пульă хăварнă пăнчă. Хăйне те палласа илчĕ вара - Петрянкин. Тутар чăвашĕ.

Ăраскал çук чух инкек те пулăшать теççĕ. Тĕрĕсех пуль çав. Акă паян Женя çывăрса тăранчĕ. Çур çул хушшинче

---

*"Таблетка" - БММП (боевая машина медицинской помощи). Çапăçу хирĕнчен аманнисене илсе тухмалли машина.

тăнăç курманскер - вăй пухрĕ, çирĕпленчĕ. Типсе шĕвĕрĕлнĕ янах шăмми çавракаланчĕ, пит çăмартисем тăп-тăпланчĕç. Пĕкĕ пек авăнса тăракан хура куç харшийĕсем айĕнчи куçсене сăн кĕчĕ. Вĕсенче шевле выля пуçларĕ. Пурнăç техĕмĕпе тулнă шевле.

Врачсем каланă тăрăх вăл уйăх хушшинче пилĕк килограма яхăн ÿт хушнă. Чăн та - госпитале лекни харама каймарĕ. Çан-çурăм çирĕпленнине çеç мар, пурнăç техĕмне те сахал мар ăнланчĕ вăл кунта. Уйăх хушшинче асаппа терт, нушапа хурлăхсăр пуçне тата вилĕме те сахал мар тĕл пулчĕ. Çумрах иккен вăл. Усал та пÿтсĕр вилĕм. Никама та хĕрхенмест. Тĕл пултăр çеç - шăлать те ÿкерет. Ахальтен каламаççĕ çав "Вилĕм шăла пăхмасть" - тесе. Афганистанра вара - пушшех. Сиссе те юлаймăн - çапать те ÿкерет. Ÿкнисем кунта мар. Вĕсем аякра. Вĕсене "Хура тюльпан" килĕсене илсе каять. Пĕрин хыççăн теприне, пĕрин хыççăн теприне...

Минтер çине таянса ларнă Женя хăй ача чухне çырнă сочинени йĕркисене аса илчĕ. "Кашни çын телее хăйне евĕр ăнланать. Пĕрне укçа кăсăклантарать, теприне - тумтир. Виççĕмĕшне - чун савни..." Тĕрĕсех, ăраскала кашни хăйне май туять. Акă паян чăваш улăпĕнчен (Женьăна палатăри ачасем çапла чĕнеççĕ), телейли никам та çук. Вăл - уралла. Вăл - сывă. Çитменнине тата Людăран, аякри чăваш çĕрĕнчи савнинчен, хĕпĕртемелли çыру илчĕ. "Юрататăп, кĕтетĕп... Мĕн пулсан та кĕтетĕп сана", - тет вăл унта. Май пулсан Афганистана та çитĕп тет.

...Шупашкар хули. Юрату сăмсахĕ. Вĕсем иккĕшĕ çеç. Икĕ савăк чун.

- Женя, чунăм, пăчăрта мана. Хытă-хытă пăчăрта. Чун тухиччен, - чĕвĕлтетрĕ хĕр сасси. - Сансăр пурнăç çук ман. Пурнăç çук... Эпĕ те санпа...

- Ан йĕр. Йĕме кирлĕ мар, - терĕ те каччă, хĕр пуçне кăкăр çинчен илсе йĕпе куçĕсенчен чуп тăва-чуп тăва илчĕ.

- Вилме каймастăп-çке. Таврăнатăп. Вара пĕрлешĕпĕр те. Эсĕ кĕт çеç".

Сарлака кăкăрта вырнаçнă юрату чечекĕ пуçне çĕклерĕ. Таврана ăшă, ырă туйăм сапаларĕ. Аса илĕве кая хăварса, çамрăк чуна пуласлăха васкатрĕ. "Акă вăл çартан таврăнать. Çĕрле, никам курман чух. Патваррăн пиллĕкмĕш хута чупса хăпарать. Шăнкăравлать... Çук... Çук.. Çĕрле мар. Çĕрле çÿреме вăл вăрă-хурах мар. Ирпе çитĕ вăл. Пирвайхи хĕвел пайăркипе. Шевле евĕр çиçсе. Ыталĕ, чуптăвĕ тăванĕсене: амăшне, йăмăкне... Çук. Малтан Женя Люда патне кĕрет. Акă вăл Сăкăт ялĕ çывăхĕнче. Умра уй-хир, чечек айне путнă уй-хир. Хирĕç вара, утмăлтурат пуссине тинĕсри карап пек çурса, унăн савниййĕ, чун чечекĕ чупать. Икĕ аллине сарса... Вара Людăна хăйĕнпе пĕрле илĕ - Шупашкара. Унта ашшĕпе амăшĕн кил-çуртне пырса кĕрĕç те - тĕвĕленĕç. Ленинграда та пĕрлех çитĕç вĕсем. Аслă вĕренÿ шкулĕсенче ăс пухĕç: Женя - океанолог, Люда - врач пулĕ... Дипломсем те акă алăрах... Карапа ишеççĕ. Тĕнче курса çÿреççĕ. Акă Женя тинĕс тĕпĕнче мерчен пуçтарать. Аквалангсăрах. Савни валли. Люда карап çинче. Çумрах - арçын ача. Коля. Вăл амăшĕн сăнлă: сарă çÿçлĕ, куçĕсем сенкер, сăмси вара... Тÿрĕ сăмси - ашшĕн. Темшĕн вăл амăшĕн пĕчĕк те каçăр сăмсине туянасшăн пулман, эсремет. Кулли те ашшĕ енне кайнă - асламăшĕн...

- Трилинский! Трилинский тетĕп! Сан патна килчĕç, - илтĕнчĕ икĕ хут Хĕрлĕ çăлтăр кавалерăн, Тарасовăн, çирĕп сасси. - Çывăратăн-им?

Женя тÿперен çĕр çине анчĕ. Сулахай куçне хĕсерех старшина енне пăхрĕ.

- Персе ан пăрах, - шăл йерчĕ леш. - Ман пурăнас килет-ха. Е эс мана духсемпе арпаштартăн? Кунта вĕсем çук.

Алăкран хура мăйăхне пÿрнисемпе сăтăрса Гена Сорокин, ун хыçĕнчен, Женьăпа пĕр ÿсĕмри тутар ачи, Айрат хăйĕн кукăр урисемпе пĕлтĕртеттерсе кĕчĕç.

- Хобасти бачасем! - алăк урати урлă ярса пуснă пусман кăшкăрчĕ Гена.

- Сидоросги, - юлмарĕ Айрат та.

- О-о-о, калап разведчиксем тесе, - хĕпĕртерĕ старшина. - Разведчик разведчика çухрăмран паллать тесе ахальтен каламаççĕ çав.

- Малтан алă аслине, - терĕ те Сорокин старшинана сывлăх сунчĕ.

- Бохайрасти бача! - терĕ ыр кăмăллăн старшина.

Женя хăйĕн патне ротăри ачасем çитнине курсан хĕпĕртесе савăнчĕ. Вырăн çинчен сиксе тăчĕ те алăк патне васкарĕ. Хăнасене ыталама пикенчĕ. Анчах та Гена унран тарса аллине хуçлатрĕ те боксла чышкаласа илчĕ. Женя та юлмарĕ унран.

- О-о-о, вăй вылять. Апла пурăнатпăр, - терĕ Сорокин Женьăна шăллĕне ыталанă пек çупăрласа, лăпкаса илчĕ.

- Ăçтан вара эсир? - ытамран вĕçерĕнсе ыйтрĕ Трилинский.

- Бомианран. Çула май кĕрсе тухас терĕмĕр, - пукансем çине майлашăнса ларнă май хуравларĕ хăна хăй суйнине палăртмасăр.

-Мĕнле кайса килтĕр вара, каласа кăтартăр-ха?- кăсăкланчĕ Женя хăй госпитальте выртнăран пăшăрханса.

- Йĕркеллĕ теме те юрать. Каравана аркатрăмăр. Пиллĕкĕшне тыткăна илтĕмĕр.

- Пирĕн мĕнле? Çухатусем çук-и? - кăсăкланчĕ чăваш каччи.

Гена сăнран улшăнчĕ. Калаçма чарăнчĕ.

- Старлей… - терĕ Айрат Сорокинăн сăмахне вĕçлесе. - Виççĕмĕш взвод командирĕ. Ăна илсе килтĕмĕр. Çула май, ак, кĕрсе тухас терĕмĕр.

Питĕ кăсăк ачаччĕ вăл: çирĕм çичĕ çулхи Виктор Иванович Лысков аслă лейтенат. Ротăра çеç мар - полкĕпех пĕлеччĕç ăна. Мĕн полк - духсене канăç сукчĕ унран…

Мĕн чухлĕ рейда, мĕн чухлĕ засадăна, зачисткăна* çӳремен пуль вăл. Пур çĕртрен те таса çĕнтерӳ ялавĕпе тухатчĕ. "Ман кăйкăра курсассăнах духсем вар чирĕпе чирлеççĕ. - тетчĕ Виктор Иванович сылтăм хул çинче ларса çӳрекен кайăкне ачашласа. - Вăл ман талисман. Унпа эпĕ нимрен те хăрамастăп. Вăл манăн çӳл тӳпери куç". Каярахпа вара разведротăна кăйкăрсем теме пуçларĕç.

- Апла иккен, дивизири чĕрĕ легенда пуçне хунă, - хашлатса илчĕ сывă алли çине чавсаланнă старшина. - Вăт çапла вăл, Петруха, халĕ кала, камăн ăраскалĕ çук. Эсĕ киле сывă таврăнатăн. Савăн. Ура çукки темех мар. Лысков вара...

Старшина çумĕнче, чӳрече патĕнче выртакан Вася Петров чĕнмесĕр йăшăлтатса илчĕ. "Эпĕ мĕн? Эпĕ нимĕн те мар. Мĕн пулнă - çав пулнă", - терĕç унăн çĕрĕ-çĕрĕпе сывăрманран шыçăннă симĕс куçĕсем.

- Сăвă вуласа парам-и? Чунăрсене йăпатма, - терĕ Женя, калаçăва кăшт урăх çĕре пăрса.

- Юрать.

- Яра пар!

- Ху çыртăн-им? - янăрарĕ палата.

- Çук. Тутарсен поэчĕ - Муса Джалиль. Шăп та лăп сире валли: "Урасăр" ятлă. Итлĕр апла:

*Эп таврăнтăм! Тăванăм, алă пар!*
*Ан тив урасăр... Пурпĕр - савăнар.*
*Усал душман, хăйне пуç çапманран,*
*Ятарласа тĕллерĕ урăран...*

Чунпа, шăла çыртса вуларĕ сăвва Трилинский. Сăмахсем чĕтрене-чĕтрене тухаççĕ. Ача чухне илтнĕ йĕркесем çĕнĕ куçпа пăхма хистеççĕ.

*Эп таврăнтăм! Тăванăм, алă пар!*
*Урасăр çав... Ан макăр... кирлĕ мар.*
*Чыса, чуна çитертĕм эп тасап, -*
*Пурпать этем, чун-чысĕ сыв пулсан!*

- Ăнланмалла-и? Чун-чысăрсене упрăр. Вĕсем таса пулсан - çăлăнăç тупатăрах.

---

*Зачистка - кишлаксене тăшмансенчен тасатни



НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
Чувашской Республики

- Ăнланмалла, - терĕç те пĕр харăс пурте алă çупа пуçларĕç. - Талант. Талант! - кăшкăрчĕç вĕсем.

- Э-э-э, мансах кайнă, - сиксе тăчĕ Гена. - Ку сире, разведротăран, "кăйкăр" парни.

Сĕтел çине тем пысăкăш арбуспа дыня тухса выртрĕç.

- Хăналанăр, - терĕ Айрат. - Пурте.

- Пĕлетĕн-и, Жень? Шавлай сана валли "сюрприз" хатĕрлесе хучĕ, - аллисене сăтăрчĕ Гена.

- Мĕнле "сюрприз" тата?

- Эсĕ ху епле шутлатăн? - ыйтрĕ Сорокин.

- Пуçа кĕмест. Ан тун-ха, кала, - чышса илчĕ Женя.

- Ан муритле пирĕн улăпа. Пĕлтер, - хута кĕчĕ Тарасов.

- БМП.

- БМП? - ĕненмерĕ Трилинский. - Çур çултан çеç паратăп терĕ-çке. Хăшне вара?

- 608-мĕшне. Астăватăн-и, "Касяк"* çуретчĕ унпа. Ну, леш ара, Айрата носки çутарма тăни. Астурăн-и? Эсĕ ăна хăлха чикки те çитернĕччĕ-ха уншăн.

- Астумасăр. Кайран пĕтĕм ентешĕсене пуçтарчĕ вĕт. Кăшт çеç мăя пăрса яратчĕç. Поляков çăлса хăварчĕ, - Женя "деда"** патак панине илтсен палата ахăлтатса кулчĕ.

- "Касяк" ăçта кайса çухалнă вара? - тĕлĕнме пăрахмарĕ Трилинский.

- Ухмаха ернĕ. Уколпа наркăмăшне ытлашширех янă тет-и? Халĕ Союза ячĕç, - ăнлантарчĕ Гена.

- Эсир халĕ Джабале каятăр-и? - кăсăкланчĕ Женя.

- Çапла.

- Эпĕ те сирĕнпе пыратăп апла.

- Сана Кабула ăсатасшăн марччĕ-и-ха? - ыйтрĕ старшина.

- Кирлех мана вăл, Кабул, - терĕ те Женя госпитальри ачасемпе сывпулашса урама тухрĕ.

Разведротăна, чунĕ чĕннĕ çĕре, васкарĕ вăл.

---

*"Касяк" - наркăмăш тултарнă пирус.

**"Дед" - служба вăхăчĕ çулталăк çурă иртнĕ салтак.

3.

Хёвеллё кун. Куҫа уҫма ҫук. Уй-хирте выртакан йăлтăркка юр пĕрчисем ахахăн-мерченĕн сирпĕнсе куҫа йăмăхтараҫҫĕ. Чуна илĕртеҫҫĕ. Канлĕн, вĕҫĕ-хĕррисĕр выртать вăл хăй-хальĕхне упраса.

Ытарайми ҫăтмах тĕнчи.

Йĕри-тавра пуш-пушă. Пĕр чун та ҫук. Аякри шур пĕркенчĕк тăхăннă вăрмантан тухса Шупашкар енне икĕ мăшăр йĕр хăпарать. Йĕлтĕр йĕрĕсем. Ҫын пырать. "Яш-яш! Яш-яш!" - шăплăха ҫурса илтĕнет унăн сасси.Васкать вăл. Ăмăртăва тухнă евĕр васкать. Вара анса тăвалла улăхрĕ. Уй урлă каҫрĕ. Умра - ҫыран. Чăнкă. Ҫумри мăшăр йĕр таҫта кайса ҫухалчĕ. Ҫын чарăнчĕ. Ун-кун пăхкаларĕ. Шапкине хывса ҫамки ҫине ҫыпҫăннă сарă ҫӳҫ пайăркине сăтăрса илчĕ.

Атăл. Сарлака та анлă Атăл. Яланах ҫуллахи шăрăхсенчен хăтарса хăйĕн ырă та ҫепĕҫ ытамне йышăнакан Атăл паян ҫывăрать. Шăппăн. Такама кĕтсе...

Люда шухăша кайса тăчĕ. Сывлăш уҫă. Таса. Хĕр кăкăрĕ ăна хапсăнса хыпăна-хыпăна ҫăтать. Пуҫри шухăшсене чунри туйăмпа арпаштарать.

Утă тавăрса пĕтернĕ хыҫҫăн, Люда юлташ хĕрĕсемпе Сăкăт ялĕ хыҫĕнче вырнаҫнă кӳлĕ хĕррине чуптарчĕ: ĕшеннĕ ҫан-ҫурăма сулхăн шывпа уҫăлтарас килчĕ.

- Нумай ан ҫӳрĕр! - илтĕнчĕ амăшĕн сасси кайри пӳрт чӳречинчен.

- Ҫук, Верук аппа, эпир часах, - терĕ кӳршĕ хĕр ачи Вероника хура-кăтра ҫӳҫĕ ҫине тутăр ҫыхса.

Виҫĕ хĕр аналла чупса анчĕҫ. Ҫийĕнчи кĕписене хывса шыва сикрĕҫ те пĕчĕк ачасем пек чăмпăлтатрĕҫ, алхасрĕҫ. Пĕр-пĕрне шывпа сирпĕтрĕҫ.

- Люда, паян вăййа тухатăн-и? - янăрарĕ Анюта сасси.

- Ҫук. Каҫпа утă хăпартатпăр эпир. Вара мунча кĕретпĕр. Йĕпе ҫӳҫпе сулланса ҫӳрес килмест, - терĕ икĕ аллипе

каçрӑлса тӑракан пӗчӗк сӑмсипе, пичӗ çине тапса тухнӑ чӗкеç шатрине шыв лекесрен хупласа:

- Эпир сана каччӑпа паллаштарасшӑнччӗ, - сӑмах хушрӗ Вероника.

- Мӗнле каччӑ тата? Мӗн аташатӑн эсӗ? - хирӗçленçи пек туса сылтӑм алӑ тупанӗпе сирпӗтсе кӑтрана шыв айне путарчӗ.

- Ай! - терӗ леш хӳтӗленсе.

- Мӗн мӗнле, Шупашкар каччипе, профессорпа, - айккинелле тарчӗ Вероника та.

- Манӑн савни ав, - тӳпере йӗр хӑварса пыракан самолет çине шӗвӗр пӳрнипе тӗллерӗ, - вӗçет.

Хӗрсем ахӑлтатса кулчӗç.

- Эпӗ тухатӑп, - терӗ Анюта кӗске çырӑ çӳçне икӗ аллипе хыçалалла сӑтӑрса.

Хӗрсем çыран хӗрринчи çерем çине тухса выртрӗç. Кӑнтӑрлахи хӗвел пайӑрки айӗнче çара çурӑмӗсене тӗрӗлерӗç. Çӳлте - янкӑр тӳпере - тӑри юрлать. "Трил! Трил! - тет вӑл чун савнине шыраса. - Трил! Трил!" Илемлӗ. Хавас. Калаçас килмест.

Шӑплӑха пӑсса, ял енчен мотоцикл кӗрлесе çитрӗ - вӗçкӗн Ваççа. Анютӑн пиччӗшӗ. "Иж-планетине" сӳнтерчӗ те ача чухне ӗне сӗксе катнӑ çӳлти тутине вылятса:

- Эсий тата нумай выйтасшӑн-и-ха? - терӗ.

- Мӗн, пушар-им? - тӑма ӳркенсе ыйтрӗ йӑмӑкӗ.

- Каçчен Патӑйелне каясшӑнччӗ. Мантӑн-им?

Хӗрсем сиксе тӑчӗç. Кӗписене вӑр-вар уртса ячӗç те мотоцикл патне вӗçтерчӗç.

- Люда, эсӗ пирӗнпе пымастӑн-им? - харӑс ыйтрӗç çавçавах çӗр чӑмӑрне ыталаса выртакан хӗртен тус-тантӑшӗсем.

- Çук. Эпӗ каярах пырӑп. Çуран. Чӳхеннӗ хыççӑн. Ман тусанпа вараланас килмест. Тепре кӗрсе тухатӑп та…

Юланутçӑсем куçран çухалчӗç. Люда пӗчченех. Вӑл пӗр самант шӑплӑха итлесе тӗпсӗр тӳпене тинкерсе выртрӗ. Пурнӑç ырлӑхӗпе рехетленчӗ. Вара сиксе тӑчӗ те чупса

пырса шыва чампăлтатрĕ. Сӳ! турĕ çан-çурăм ĕмĕрлĕх сулхăн тĕнчине лексе.

Чун каниччен ишрĕ хĕр. Ывăннă хыççăн тухма хатĕрленчĕ. Анчах та... Урасем хуçланса ларчĕç. Пӳ йывăрланса килчĕ. Чул пек анса кайрĕ. Люда юлашки вăйне пуçтарса çӳлелле тапаçланчĕ.

- Пу-у-у..! - чыхăнса кăшкăрчĕ вăл. Анчах та Шыври ăна ярасшăн мар. Хăйĕн патшалăхне сĕтĕрсе анса кайрĕ. "Пĕтрĕм! - вĕлтлетрĕ шухăш вун улт çулхи хĕрĕн пуçĕнче. - Çитрĕм..."

Çӳçрен туртса кăларнине вăл тĕлĕкри пек çеç ас тăвать.

Куçне уçрĕ. Çумĕнче ларакан çын:

- Çылăх, чиперук, çакăн пек ырă та пархатарлă кун шыва путса вилме, - терĕ кăвак куçĕсемпе хĕр çине пăхса.

Куян тути евĕр кăшт хăпарса тăракан çинçе, çепĕç тутисене хускатма именсе выртрĕ Люда. Ара, çак кунччен ăна ун пек никам та чĕнсе курманччĕ-çке-ха. "Кам ку?" - вĕлтлетрĕ шухăш пуçра. Ун-кун пăхрĕ. Никам та. "Ахăртнех, мана çăлакан".

Тăрса ларчĕ. Чĕнме чĕлхе вĕçне сăмахсем килмерĕç. Пуç кашларĕ. Ӳпкерен кăкăра ыраттарса шыв пĕрхĕне-пĕрхĕне килчĕ, чыхăнтарчĕ.

- Тавтапуç сана, палламан çыннăм, мана çăлса кăларнăшăн, - кăшт чуна кĕрсен чĕвĕлтетрĕ хĕр чĕри мĕн пулса иртнине ăнкарма пикенсе.

- Палламан çыннăм? - янк! сиксе тăчĕ каччă. - Эс мĕн, Люда, халĕ те вăранаймастăн-и вара? Пăх-ха ман çине.

Умра яштака та кĕрнеклĕ йĕкĕт.

Мĕнле тилмĕрсен те Люда çынна палласа илеймерĕ. Кĕске каснă хура çӳçĕ те, хĕвел çинче çуталса тăракан сарлака çамки те, çиçсе тăракан хулăн тутисем те, уйрăмах сулахай куçне хĕссе пăхни те никама аса илтереймерĕç ăна. Пĕр сăмахпа - ют çын. Люда пĕлмен, илтмен çын.

- Çук, - пуçне силлерĕ хĕр.

- Женя эпĕ, Трилинский, - терĕ каччă кулса.

- Женя? - куçсене чарса пăрахрĕ Люда каччăн сассине тин палласа. - Лидяппан ывăлĕ-и?

Хĕр хăйĕн çине хăраса та именсе пăхнине сиссе Женя:

- Çапла, чиперук, Лида аппа ывăлĕ. Ĕненместĕн-им? - терĕ.

- Сан куçу вĕт-ха.. - çав-çавах тĕлĕнме пăрахмарĕ Люда.

- ...хăнчăрччĕ, - вĕçлесе пĕтерчĕ каччă. - Операци тутартăм. Святослав Федоров поликлиникинче. Халĕ "профессор" тесе вăрçтарма чăрăнатăн пуль ĕнтĕ. Профессоркуçлăхпа. Эпĕ вара унпа ĕмĕрлĕхех сывпулашрăм.

Хĕр пуçне усрĕ. Пит çине тапса тухнă аванмарлăха умра тăракан каччăран пытарчĕ. Тĕлĕнтермĕш. Паянхи медицина тĕлĕнтермĕшĕ ăна шиклентерсе, çӳçентерсе илчĕ. Куçран пăхма хăйтармарĕ: çерем çине çаврăнса выртрĕ.

Уйри шурă, сарă, кăвак, писев чечексем хушшипе лĕпĕш явăнать. Илемлĕ, тĕрлĕ тĕслĕ лĕпĕш çутçанталăкăн симпыл тути калакан иксĕлми техĕмĕнче ырми-канми ишет. Пĕр чечекрен теприн патне çитет. Мăштăртатать. Малалла вĕçет. Пĕччен мар иккен вăл - тусĕпе. Тырă пусси çумĕнчи сарăлса ларакан утмăл туратсем хушшинчен тухрĕ вăл - мăнаçлăн ик çунаттипе хăлаçланса. Пĕлĕшне хуса çитрĕ те выля пуçларĕ. Вĕлтĕр те вĕлтĕр çаврăнаççĕ вĕсем хĕвел çути айĕнче. Вĕлтĕр те вĕлтĕр. Илемлĕ. Хавас тĕнчере. Никам чăрмантаракан çук. Вĕсем - иккĕн çеç... Икĕ савăк чун.

Çак кун Люда чĕринче - лутра пӳллĕ ялти сар хĕр чĕринче - ĕмĕрлĕхех асăмра юлчĕ. Ун чух вăл çут тĕнчене таврăнчĕ, хăйĕн пуласлăхне суйларĕ: чун савнипе профессине.

Люда йĕлтĕрпе ярăнса ывăнчĕ те хуланалла çул тытрĕ. Шупашкар хĕррине çитсен Кривов урамĕпе хăпарчĕ. "Çурçĕр" пасар çумĕпе иртсе пынă чух вăл Иван Васильевича, медучилище преподавательне тĕл пулчĕ. Çӳрен çын хушшинче асăрхамасăрах иртсе кайĕччĕ пуль. Анчах та лешĕ хăй чĕнчĕ.

- Михайлова! Людмила Константиновна! - тытса чарчӗ чике сухаллӑ старик ӑна.

Хулӑн куҫлӑх витӗр хӗр ҫине шапа пек пысӑк куҫсем мӑчлата-мӑчлата пӑхаҫҫӗ.

- П-паллаймарӑн-им?

- Шухӑша путнӑ та... - хӑйӗн тимсӗрлӗхне ӑнлантарчӗ хӗр.

- Ҫ-ҫапла пуль ҫав, - куҫлӑхне хывса тутӑрпа сӑтӑрчӗ. - Эсӗ вара малалла вӗренме каясшӑн-и, е ӗҫлесшӗн?

- Ӗҫлеме, - сивле чунне путарса хуравларӗ Сӑкӑт хӗрӗ.

- Х-хӗрлӗ дипломпа э-эсӗ университета экзаменсӑрах кӗрейӗн. Мӗншӗн усӑ к-курмастӑн?

- Ӗҫлесе пӑхас килет. Тен, пурӑна киле шухӑшсем те улшӑнӗҫ-ха унта, - суйрӗ ҫамрӑк медсестра.

- И-илтнӗ-ха эпӗ... Ҫ-ҫавӑнтах каясшӑн-и вара эсӗ?

Калаҫу мӗн ҫинчен пынине ӑнланчӗ Людмила Константиновна. Иртнӗ уйӑхра вӑл ҫар комиссариатне кайса хӑйне вӗренсе пӗтернӗ хыҫҫӑн Афганистана яма хут ҫырса пачӗ. Халӗ йыхрав кӗтрӗ.

"Ай-бо-болит" - студентсем Иван Васильевича чике сухалне кура ҫавӑн пек чӗнеҫҫӗ - патне ку хыпар ҫитни Людӑна тӗлӗнтермерӗ. "Пӗтӗм училище пӗлет апла", - терӗ те ӑшӗнче чунран темле чул тухса ӳкрӗ. Вӑрттӑн япала тӑрӑ шыв ҫине тухатех ҫав. Мӗнле тӑрӑшсан та - пытараймӑн.

- Ҫавӑнтах.

- В-вӑрҫӑ-ҫке у-унта, - куҫлӑхне тӑхӑнчӗ старик.

- Эпӗ госпитальте ҫеҫ ӗҫлетӗп. Ҫапӑҫӑва хутшӑнаймастӑп, - пуҫне усса чӗнмесӗр тӑчӗ-тӑчӗ те хушса хучӗ, - камӑн та пулсан аманнисене пӑхмалла-ҫке?

- Ю-юрӗ э-эппин, к-кайиччен курнӑҫӑпӑр-ха, - сыв пулашса алӑ пачӗ профессор. - Асӑрхан э-эсӗ унта. В-вӑрҫӑ в-вӑрҫах в-вӑл. А-ӑнланмасть. П-пурне те ш-шӑлать, а-ачам.

Уйрӑлса кайма тӑрсан, ҫаврӑнчӗ те:

- Т-тӗрӗс х-хӗрӗм. С-сан в-вырӑнта, т-тен, э-эпӗ те ҫ-

çавна-нах т-т-тăвăттăм, - чĕтрекен сассипе хушса хучĕ. Вара курпунне кăларса малалла танкăлтатрĕ.

Профессор ыркăмăллăхĕ хĕре шиклентерсе çӳçентерчĕ. Шухăшсене арпаштарчĕ.

Общежити сĕрлесе тăрать: пĕри кĕрет, тепри тухать. Вахтăна хурала тăратнă Маруç аккана асăрхамаççĕ те. Хĕвĕшеççĕ, хĕвĕшеççĕ. Кивĕ çĕнĕ çул кĕтсе илме васкаççĕ. 1988 çула.

Маруç акка шурă çӳçĕсене хĕрхенмесĕр тем вăрçать, тем ятлаçать.

- Миçе хутчен каланă сире, кĕртместĕп тесе! Вĕçтерĕр кунтан! Ахăлтатса ан тăрăр. Эп сирĕнпе пĕр çулхи мар манпа выляса тăма! - тет вăл. - Пӳтсĕрсем...

Люда халăх хушшинчен тухса малалла иртрĕ. Алăк хăлăпне тытнăччĕ ĕнтĕ.

- Эп пӳтсĕр мар. Эп - афганец! - илтĕнчĕ сасă.

Михайлова çаврăнса пăхрĕ. Хăнтăр тирĕнчен çĕленĕ çĕлĕклĕ каччă катăк шăлĕсене кăтартса елпĕрет. Ахăртнех пĕр черкке çеç ĕçмен. Сарлака, тăваткал пит çинче симĕс хура куçĕсем ялтăртатса тăраççĕ. Алманчă каччи, Сергей. Хăй вăхăтĕнче вĕсем пĕр шкулта вĕреннĕччĕ. Саккăрмĕш класра чух ашшĕ эрех-сăрапа алхаснăран амăшĕ уйрăлчĕ. Алманча каччă тухрĕ. Ывăлне хăйпе илсе кайрĕ. Унтанпа нумай вăхăт иртрĕ. Улт-çичĕ çул та пур пуль.

- Сергей? - каччă патне утрĕ хĕр. - Эс мĕскер туса çӳретĕн кунта?

- Хăнана килтĕм, - хăйĕнпе каласакана тӳрех паллай-масăр сассине пусарчĕ каччă.

- Хăнара ураççĕ-им ăна?

- Людмила Михайлова, сире кĕтсе тăраççĕ, - илтĕнчĕ вахтер сасси.

- Люда? - терĕ те каччă çухалчĕ.

- Кам, Маруç акка?

- Ав çав хĕр.

Михайлова никама та асăрхамарĕ.

- Люда, - илтĕнчĕ тин çеç каччă çухалнă енчен.

- Ку эпё-ха, Анюта.

Хёрсем ыталашса илчёç. Алäри йёлтёр кăшт çеç тухса ÿкмерё.

- Пёрле мар пуль те, - пуçне каччăсем енне сёлтрё Люда.

- Ахă, анчах та пурте мар. Виççёшё çеç. Урамра тёл пулчёç те. Сана аса илтёмёр. Атя та атя тет. Хăй вара паллаймарё те акă, - Анюта кулса илчё. - Кинона илсе каясшăн. Пыратăн-и?

- Çук. Пыраймастăп. Манăн "Мерчене" юрлама каймалла. Иккё валли, - хирёçлерё Люда. - Вăл салтакра чăнласах Афганистанра пулнă-и вара?

- Çапла тет, - хёрсем куç айёсемпе вăрттăн çывăхра тăракан каччăсем çине пăхса илчёç. - Атя, кутăнлашса ан тăр. Ксюшăна ил те, - юлмарё Анюта.

- Ÿсёр те вёсем сан.

- Ан хăра, усал мар вёсем.

Чёрере çуралнă шанчăк çунакан чуна килёшмех хистерё. Курман, пёлмен çёр-шыва васкатрё.

Ксюша пёр пÿлёмре пурăнакан çырă çÿçлё хёр, хаваспах килёшрё. Вара вёсем общежитинчен тухса "Çеçпёл" кинотеатр енне çул тытрёç.

### 4.

Çанталăк сивётрё. Çывăхри тÿремрен полк тăракан сăрт енне вичкён çил вирхёне-вирхёне кёрсе улать, казарма кантăкёсене пыра-пыра шаккать. Чарусăр алхасать вăл. Иртсе çÿрекен салтаксене те хёрхенмест: çÿçентере-çÿçентере чётрентерет, ăшăрах тăхăнма хистет. Çёркаç ÿкнё юр çеç ура айёнче илемлён юрласа чуна çемçетет. Киле, Тăван кётесе илсе çитерет вёсене.

Петр Шавлай урама тухрё. Ун-кун пăхкаларё те çирёп утăмпа парк енне танккарё. Вăл инçех мар. Казармăсем хыçёнчех вырăнаçнă. Штабран парка çитме ăна пилёк минут кирлё. Çавăнпа та вăл ытла васкамарё. Малтан КПП енче вырнаçнă лавкана кёрсе тухрё. Туртмалли илчё. Вара полк çумёнчен иртекен çул çине тинкерчё: Салангран бурбу-

хайкӑсем* анаҫҫӗ. Джабаль-ус-Сираджа кӗмеҫҫӗ вӗсем. Иртсе каяҫҫӗ. Кабула.

Чардехи те лӑпкӑн (лӑпкӑн-ши), канать. Юр айне путнӑ тӳрем тӑван кӗтесе аса илтерчӗ. Алтай ҫывӑхне. Унта пулманни ҫулталӑк ҫурӑ ӗнтӗ. Ывӑлӗ те ӳссе ҫитрӗ пуль халиччен. Хӑть пӗр кана ыталасчӗ кӑкӑр ҫумне вӗсене - арӑмӗпе ывӑлне. Пӑчӑртасчӗ. Темле ҫав. Ыталайӗ-ши?

Шухӑшсене пӑрса палӑртнӑ ҫӗре утрӗ.

- Мӗскер унта сирӗн? - БМП айӗнче чакаланакан салтаксем патне пырса ыйтрӗ вӑл.

- Гусеницӑна турттармалла, капитан юлташ, - пуҫне кӑларчӗ водитель. - Сикет.

Евгений иккен. Ҫамрӑк салтак. Икӗ эрне каялла вӑл БМП ҫине ларчӗ. Суранланнӑ урине пӑхмасӑр госпитальтен тарса килчӗ. Тӑрмӑшать. Ӳркенместь курӑнать. Эрне хушшинче машинӑна сӳтсе пуҫтарчӗ. Чупакан турӗ. Маттур. Ӑҫтисем-ши?

- Эсир, капитан юлташ, чӑвашсем пирки илтнӗ-и? - ыйтӑва ыйтупа хуравларӗ Женя ҫиҫсе.

- Илтнӗ, мӗншӗн илтмен, - пысӑк хура хӑмӑр куҫӗсене вылятса хуравларӗ капитан.

- Курнӑ-и вара?

- Ҫук, курман, - ухмаха печӗ командир.

- Сирӗн умӑрта вӑл, - терӗ Трилинский тикӗтпе вараланнӑ аллине сӑтӑрса.

- Хавас паллашма. Сӑмахпа теветкел, ҫапӑҫура вара - пӑхӑпӑр, - терӗ.

- Унта та теветкел пулӑп. Ҫынран юлмӑп, - хӗрелсе калаҫрӗ чӑваш ачи.

- Юрӗ, юрӗ. Хӑҫан пӗтерес тетӗн?

Командир БМП ҫинче тӑракан кӑйкӑра пуҫӗнчен ачашласа илчӗ. Леш пуҫне пӗке-пӗке тав турӗ. Ҫунаттипе вылятрӗ. Лысков вилнӗ хыҫҫӑн "Орлик" хавшаса ӳкрӗ: апат йышӑнма пӑрахрӗ, салтаксене паллами пулчӗ. Пурте "нумая тӑсӑлаймасть" тетчӗҫ. Анчах та ҫак чӑваш каччи Три-

*Бурбухайкӑсем - машина

линский ротăна таврăнсан кайăк улшăнчĕ. Хăш вăхăтра вĕсем пĕр-пĕринпе сăмах тупнине Шавлай ак паянхи кун та ăнкараймасть-ха. Тĕлĕнет. Ахăртнех вăл та чун ăшшине юратать, кайăк темĕн ҫав.

- Кăнтăрлаччен вĕҫлесшĕн, - пĕлтерчĕ салтак.

- Ҫитертĕн-и? - пуҫне кăйкăр енне сĕлтрĕ капитан.

- Ҫук.

- Тĕрĕс. Операци хыҫҫăн ҫитерĕпĕр, - терĕ те командир малалла уттарчĕ. Ыттисемпе калаҫрĕ. Вара штаба васкарĕ. Ҫула май 608-мĕш умĕнче чарăнчĕ те, ĕҫсĕр тăракан салтака чĕнсе:

- Галимшин! - терĕ.

- Эпĕ! - янк! ҫаврăнчĕ Айрат, аслă стрелок.

- Тыт, - кĕсйинчен ҫыру купи кăларса пачĕ. - Валеҫ.

Икĕ салтак ҫырусене ылмаштара-ылмаштара вĕсем кам патне килнине тĕрĕслерĕҫ.

- Маликов, Мамедов, Мельник, - вуларĕҫ вĕсем пĕр харăс. - О-о-о! Трилинский, каллех Трилинский, каллех... Мĕне пĕлтерет ку? Сан мĕн унта, Шупашкарĕпех хĕрсеми? - кулчĕ Айрат.

- Ҫук. Килтен вĕсем. Ку ак, - ҫырăва шăршласа пăхрĕ, - савниren.

- О-о-о, мана та манмарĕҫ иккен, - пăхса пĕтерсен ыттисене пуҫтарса хучĕ, пĕрне уҫса вуларĕ Айрат. Хăйĕн патне килнине.

- Якшим булды, - терĕ вара.

- Шулай, - килĕшрĕ унпа чăваш та.

Кăнтăрла тĕлне юр ирĕлсе пĕтрĕ. Тавра лапраланчĕ. Пĕлĕтсем, хура кăвак пĕлĕтсем, хĕвеле хăйсен ытамĕнчен вĕҫертсе Киндугуша хупăрларĕҫ. Саланг перевалне тапăнчĕҫ. Кассăн-кассăн.

Женя ҫула тухма хатĕрленнĕ БМПсем хыҫне пырса чарăнчĕ. КПП ҫывăхĕнче, развердрота командирĕ Шавлай офицерсемпе сержантсене пулас маршрутпа паллаштарать.

- Пирĕн паян Чарнистак кишлакне ҫитмелле, ыран

килекен гуманитари колонни валли коридор уçмалла. Çул çинче асăрханулла пулăр. Эп малта пыратăп - 608-мĕшĕпе, - терĕ çеç, умра тӳремрен тем шăхăрса вĕçсе килни илтĕнчĕ. Кĕрс! Кĕрс! турĕç пĕрин хыççăн тепри минăсем.

- Духсем! - кăшкăрчĕ часовой сад енне персе.

БМП çинчи ачасем шала кĕрсе ларчĕç: шанчăклăрах. Малти БМП салтака пулăшса тупăран перкелесе илчĕ те шăпланчĕ.

- Эсреметсем, - шăл витĕр сурса илчĕ тин çеç броня çине хăпарса ларнă Шавлай. - Кивĕ Çĕнĕ çулпа парнелеççĕ ĕнтĕ.

Шала кĕрсе ларчĕ те шлемне раципе çыхăнтарчĕ.

- "Хурчка", "Хурчка", эп "Кăйкăр". Тапранма ирĕк парсамăр, - терĕ.

- Эп "Хурчка". Ăнăçу сире, - илтĕнчĕ полкач сасси.

- Кайрăмăр!

Пурте пĕр харăс çул хĕррине хура тĕтĕм хăварса тапранчĕç. 608-мĕшĕ те вĕсенчен юлмарĕ. Тинĕсри кимĕ евĕр сиксе илчĕ те вирхĕнчĕ. Сассăр. Юмахри пек.

- Хуса ирт, - илтĕнчĕ çумри капитан сасси.

Женя мала тухрĕ. Гульбахарта разведрота сулахая пăрăнчĕ. Чайхана умĕнчен иртсен вĕсем арпа çулĕпе чуптарчĕç: кукăр-макăр, пыльчăк çăрса.

Чарнистака кĕрсен разведчиксене хирĕç пĕр старик чупрĕ.

- Нис! Нис!* - кăшкăрчĕ вăл аллисемпе юнаса.

- Чи меге, бача?** - броня çинчен ыйтрĕ командир.

- Инджибе басмач нис***. Басмач хароп****, - пакăлтатрĕ старик шур сухалне сăтăра-сăтăра.

Петр Шавлай тăлмача чĕнсе илчĕ. Хăйсем кунта мĕнле тĕллевпе килнине ăнлантарса пама хушрĕ.

Лешĕн куçĕсем çуталса ялтăртатрĕç. Вĕсенче савăнăç

---

*Нис - çук, кирлĕ мар.

**Чи меге, бача - мĕскер пулчĕ, çыннăм.

***Инджибе басмач нис - кунта басмачсем çук.

****Басмач хароп - басмачсем начар.

вырӑнне тунсӑхпа асӑрханулӑх. Апла пулин те вӑл БМП умӗнче чупсах разведчиксене ҫул кӑтартса пычӗ.

- Инджибе! Инджибе! - кӑшкӑрчӗ старик.

Кишлакран тухсан Шавлай разведчиксене ҫапла каларӗ:

- Халӗ эпир сирӗнпе взводсем ҫине пайланатпӑр. Пӗрремӗш - ав ҫав сӑрт ҫине, - командир Чарнистакӑн сылтӑм енне кӑтартрӗ. - Унта ҫирӗпленсе ларатӑр. Сирӗнпе миномет расчечӗ. Иккӗмӗш - сулахая. Эпир виҫҫӗмӗшпе ҫак хушӑка хӳтӗлӗпӗр. Асӑрханӑр - Мамук Абу-Хан хурахӗсем ҫывӑхрах. Вӗсен чӑрсӑрлӑхне аса илтермесен те юрать пуль сире. Пӗрре мар тирӗннӗ.

Ҫумри дувал патне вырнаҫрӗҫ вӗсем. Салтаксем кам чулсенчен, кам тӑма чакаласа хӳйсене валли вырӑнсем майлаштарчӗҫ. Лапрана хырса тасатрӗҫ, вак чул сарчӗҫ. Пушаннисем тушенкӑсене тӗплерӗҫ. Кишлакран чупса тухнӑ ача-пӑча шуравине* тишкерет. Хӑшӗ-пӗри патакне тӗллесе пӑх! пӑх! тет. Перет.

Лӑпкӑ. Айлӑмран, рис, тырӑ акмалли тӳремрен, унта-кунта вырнаҫнӑ дувалсем хушшипе йӑпшӑнса салтаксене шухӑ ҫил киле-киле тӑпалать: "Мӗн туса ҫӳретӗр ютра?" - тет. "Кай! Кай! - пыра-пыра тирет вӑл, шурависене. - Кай! Кай!" Илтмеҫҫӗ вӗсем. Илтме хушман.

Тӳпере ярӑна-ярӑна вӗҫекен кӑйкӑра ҫил шиклентермест. Вӑл мӑнаҫлӑн ишет тӗпсӗр тӳпере. "Орлик" - сыхӑра.

- Капитан! - илтӗнчӗ Трилинский сасси. - Пӑхӑр-ха! "Орлик" пӑшӑрханать.

Пурте ҫӳлелле пӑхрӗҫ. Чӑн та, кӑйкӑр кӑшкӑра-кӑшкӑра явӑнать:

хӑрушлӑх пирки систерет.

Женя аллине тӑсрӗ те ши-и-и! шӑхӑрчӗ. Кӑйкӑр килсе ларчӗ. Унччен те пулмарӗ, рацине чун кӗчӗ.

- "Кӑйкӑр", "Кӑйкӑр", эп пӗрремӗш... Кишлакра ҫын-

---

*Шурави - совет.

сем хěвěшеççě, - çирěплетрě "Орлик" пăшăрханăвне сылтăм сăрт çинчен Васькин лейтенант.

- Маттур "Орлик", - терě командир. - Хăнасем çула тухнă. Хатěр пулăр!

Тытăнчě. Тўрем енчен каçхи сěмлěхе çурса умлăн-çийěн трассерсем вěçеççě. Çывăхри çěре, чула, броньăна лекелеке сывлăшра вилěм тěрри тěрлесе çўлелле сирпěнеççě. Никама тупайманран тулхăрса ши-и-и! ши-и-и! тесе çухăраççě те тěпсěрлěхре канăç тупаççě вěсем. "Кěрěс! Кěрěс!" - хутшăнаççě вěсем хушшине мина, граната ылханěсем: "Кěрěс! Кěрěс! Шăп-шап!" - янăрать ту.

Женя машинăна пăрахман. Вăл люкран пуçне кăларнă та айлăмран хирěнекен духсене автоматри вилěм çырлипе хăналать.

- Тархасшăн, тав кирлě мар. Тепре килěр, - тет пемессерен.

- Шурави парăн! - илтěнчě сулахайран, тип вартан.

Евгений сасă енне çаврăнчě. Чулсем хыçěнче икě мěлке пулеметран шатăртаттараççě: çăт-çат! çăт-çат! турě броня.

Пěшкěнсе "эфка" илчě те чеккине туртса духсене ывăтса пачě:

- Шурависем парăнмаççě! - кăшкăрчě хирěç. - Тытăр бакшиш!

Духсем тěтěм айне путрěç. Çирěç пуçěсене.

- Пуçна ил! - кăшкăрчě Шавлай. - Суккăр теветкелěх кирлě мар мана!

Айрат та махха памасть. Тутарла вăрçа-вăрçа пушкăран шатлаттарать. Каçхи серенада çырать: шăп-шап! шăп-шап-шап!

- Пěрремěш, иккěмěш, эп, "Кăйкăр", - турисемпе çыхăнчě разведрота командирě. - Мěнле эсир унта?

- Йěркеллě. Пирěн шăп, - илтěнчě сасă.

- Духсене куратăр-и?

- Çапла.

- Апла "сăмоварсене" чěртсе ярăр. "Хăярсене" ан шеллěр. Мамук хăй килнě курăнать.

Кĕçех, каçхи çапăçăва кисрентерсе минăсем çурăла пуçларĕç: разведчиксем духсене хăналарĕç "А-а-а! А-ă-ă! - юрлать çутă уйăха хăратса вилĕм юрри анат енчен. -А-а-а! А-ă-ă!"

Дувал хыçĕнчен тем мĕлтлетрĕ: йĕр хăварса БМП енне ракета вĕçрĕ. Кĕрĕс!!! турĕ вăл.

Шăп. Женя гусеница умĕнче выртать. Куç курмасть. Салтак сывах-и тесе хăйне хыпашласа пăхрĕ. Йĕркеллех. Куçне уçрĕ: тӳпене хура тĕтĕм мăкăрланать - БМП!

- Айрат! Капитан! - кăшкăрчĕ пĕтĕм вăйран чăваш ачи. - Айрат! Капитан!

Чĕнмерĕç. Илтмерĕç ăна.

Мĕшĕлтетме вăхăт çук. Автомата БМП çумне хучĕ те шала чăмрĕ. Вут ăшне. Чи малтан Айрата кăларчĕ, унтан "Орлика". Çунакан урине сӳнтерчĕ те кăйкăра Айрат çумне хучĕ. Хăй малти люка сикрĕ. Тискер вĕри тĕттĕмлĕхре чун шырарĕ. Акă тем çемçи лекрĕ. Мĕн пур вăя пухса люкран ывăтрĕ, уринчен чышса çĕре ӳкерчĕ: "Йăмпăлт", - турĕ капитан. Хăй сикрĕ. Хул урлă çакса çывăхри дувала лĕпсĕртетрĕ.

- Кам ку? - ыйтрĕ Вова Поляков старшина.

- Капитан. БМП çунать, - терĕ Женя чыхăна-чыхăна. Пуç çаврăнса килчĕ. Тăнне çухатрĕ.

- Айрат! - терĕ вăл куçне уçсан. - Унта Айрат.

- Илсе килтĕмĕр ăна, лăплан, - илтĕнчĕ капитанăн сасси. - Маттур. Тавах сана, чăваш паттăрĕ!

- Галимйшин ăçта вара? - лăпланмарĕ тĕтĕмпе чыхăннă салтак.

- Вилнĕ вăл. Ав, - дувал çумĕнче выртакан тĕмеске енне сĕлтрĕ старшина.

Тул çутăлчĕ. Духсем чакрĕç. Царандоецсем пĕлтернĕ тăрăх, Мамук Абу-Хан çĕркаç йывăр аманнă. Колонна та йĕркеллех çитнĕ. Дехкансене валли апат-çимĕç илсе килнĕ мĕн. Вĕсемпе киношниксем килни пирки те калаçрĕç полкра...

5.

Пӳлёмре никам та ҫук. Хёрсем кайса пётнё: кам килёсене, кам ҫёнё ёҫ вырӑнне. Люда та кёҫех ҫула тухмалла. Япаласем пуҫтарса хунӑ ёнтё: алӑк ҫывӑхёнче икё пысӑк кӑвак сумка хӑйсен шӑписене кётсе лараҫҫё.

Хёр стена ҫине тирсе хунӑ сӑнӳкерчёке илчё. Унтан тунсӑхлӑ куҫсемпе салтак пӑхать, пит ҫӑмартийёсем типнё, янаххи шёвёрёлсе тухнӑ, анчах та шанчӑка ҫухатман салтак.

Хёр ларчё. Сӑнӳкерчёке алран вёҫертмесёр ҫырӑва илчё те чуна лӑплантарас тесе йёркесене пёрин-хыҫҫӑн теприне ҫӑта пуҫларё.

"Ырӑ кун тёлне килем... Эпё Джабаль-ус-Сирадж хулинче тӑракан полкра разведкӑра службӑра тӑратӑп. Кабул-Шерхан ҫулё ҫинче. Ҫурҫёрте Гиндугуш - чи пысӑк тӳ. 7455 метр ҫӳллёш вӑл. Амӑр ҫанталӑкра хӑйён тискерлёхёпе палӑрса тӑрать. Полк умёнче садсемпе, рис анисемпе тулнӑ тӳрем вырӑн - Чардехи. Ун пекки Афганистанра урӑх ниҫта та ҫук. Вӑл чи сарлаки, ҫулласенче чи илемли теҫҫё.

Иртнё эрнере мана ҫёнё БМП пачёҫ. Союзран хӑваласа килчёҫ. Лешё кивё ҫёнё ҫул каҫ ҫунса кайрё. Шӑрпӑк коробки пек.

...Чунӑмҫӑм, эсё кунта ман пата килес пирки ҫыратӑн. Ан та шутла! Ку Туркмени мар. Ку - Афган. Нис! Нис! Нис! Тепёр хут Нис!"

Хёр ҫырӑва вуласа пётерчё. Йӑл ҫиҫрёҫ унӑн ҫепёҫ те кёрен тутисем. "Ахаллён ан вӑрҫӑн. Кёт, ыран-паян ҫитетёп", - терёҫ вёсем. Ашшӑн. Тёлпулӑва кётсе.

Анкарти хыҫёнчи сад пахчи, хӑйён хӳтлёхёнчи сак ҫине вырнаҫнӑ икё савӑк чуна чӑрмантарма хӑраса, канлён, каҫхи сулхӑнпа рехетленсе выртать. Хутран-ситрен тӳперен ӳкекен ылтӑн шевлесемпе ҫӑвӑнса вёлт! вёлт! куҫ хёсет: хёпёртет - юрату ешерет.

Ял ҫывӑхёнчи кӳлёре пурӑнакан шапасемпе тёмсем

хыçӗнчи шăрчăк çеç çăтмахри канăçа пăсса пӗр-пӗринпе тупăша-тупăша каччăпа хӗре ӗмӗрлӗхех асра тăрса юлмалли сассине парнелеççӗ. Ыррăн. Чунсене йăпатса илтӗнеççӗ вӗсем. Каçхи юрăсем.

Йывăççем каччăпа хӗр аллисенче вунă класс пӗтерни çинчен калакан аттестатсене асăрханă хыççăн çат-çат-çат алă çупрӗç те чăш! чăш! терӗç. Шăкăл-шăкăл калаçнине итлес тенӗн.

- Мана юратнăранах яла вӗренме куçрăн-и вара? - йăпшăнчӗ хӗр каччă çумне.

- Варти ялта чух хулара епле пурăнас-ха? - пăшăлтатрӗ Шупашкар каччи.

- Санăн вара хулара урăх никам та çук-и? - кăсăкланчӗ чиперук иккӗленчӗклӗ куçӗсене тартса.

- Çук. Пӗр эсӗ çеç ман чӗрере, - çумнерех пăчăртанчӗ каччă.

- Иртнӗ çулла яла килни вара? - кӗвӗçсе илчӗ хӗр.

- Иртнӗ çулла? - ăнланмана персе тепӗр хут ыйтрӗ Женя.

- Çапла, - елпӗрсе илчӗ кӗвӗçен чун.

- А-а-а! Ирина пирки калатăн иккен эсӗ.

- Ирина пирки çав, - янк! сиксе тăчӗ каччăн ытамӗнчен хăтăлса Людмила.

Аякра каçхи тӳлеке пăлхантарса купăс янăраса кайрӗ. Сад пахчине вăратса хумхатрӗ.

- Атя ваййа! - çирӗппӗн каласа хучӗ вара вăл кӳреннӗ сасăпа.

Йӗкӗт хыçалтан пырса ăна йӗтӗр пек çӳхе пилӗкӗнчен тытрӗ те хăйӗн çумне пăчăртарӗ. Шур пурçăн кӗпе айӗнчи ӳт канлӗхе туйса сăр-сăр çӳçенсе илчӗ. Ытамра хӳтлӗх шырарӗ, лăпчăнчӗ.

- Ухтӳк, - терӗ Женя. - Вăл вӗт кассета илме килнӗччӗ. Астăватăн-и? Иксӗмӗр çырма хӗрринче итлеттӗмӗрччӗ. Ну, леш ара "Сансăр ман, сансăр ман пурнăç çук", - текенни.

Хӗр ытамран вӗçерӗнмесӗр çаврăнчӗ те, каччa куçран пăхрӗ.

- Апла пулсан ма вара вăл мана курсан хӗрелсе кайрӗ.

Çухалчĕ, - çамрăк чĕрине кăтăкласа кӳлешме чаранмарĕ каçăр сăмса.

- Сана курсан пирĕшти те çухалса кайĕ. Эсĕ пĕрре çеç, - терĕ те Женя хăюлланса хĕрĕн каçăрăлса тăракан çӳлти тутине хăйĕн кăпăшкисемпе чăплаттарчĕ. Пĕçерсе илчĕ. Çан-çурăм вут-хĕм сирпĕте пуçларĕ. Каçхи сулхăн çил вĕсене чарусăр тăпалани çеç ирĕлсе уйăх тĕнчипе пăчланса хутăшма чăрмантарчĕ. Çăтмахри çемĕпе ташлакан чĕресем çеç (çил лекмен вырăн) шăранса ĕмĕрлĕхе çыпçăнса ларчĕç. Нихăçан уйрăлми. Хурçă пек.

Куç умĕнче Людмила Константиновна хар-халлĕхе тавăрса тем вĕлтлетрĕ. Ун-кун пăхкаларĕ. Çук. Шевле пуль - ялтăркка пĕрчисемпе вылякан хĕвел шевли.

Йăпăлт! Йăпăлт! турĕ каллех. Лĕпĕш. Уйра çăвĕ-çăвĕпе хĕвĕшекен тĕрлĕ тĕслĕ лĕпĕш. Ахăртнех, хĕл каçма хӳтлĕх вырăн шыраса вăл кантăксем хушшине кĕрсе ларнă. Халĕ акă кантăкран кĕрекен пурнăç çути ăшшинче тăна кĕнĕ. Вĕçме хал çитерейместĕр вĕлт! вĕлт! тăвать те ӳкет.

Хĕр чĕри капкăна лекнĕ чуна ирĕке ярас тесе кантăка уçма тăчĕ. Анчах та лăпланма пĕлменскер вĕлт! вĕлт! турĕ те хĕлкаçа каркалама ĕлкĕрнĕ эрешмен карри çине çакланчĕ. Сунарçи çавна çеç кĕтнĕ тейĕн, чупса тухса хаяр сăннипе яшлаттарчĕ. Лĕпĕш юлашки вăйне пухса çунаттисене чĕтрете-чĕтрете илчĕ. Çывăхри хĕртен пулăшу ыйтса пушанса юлнă пӳлĕме аран илтĕнмелле кантăкран такăртаттарчĕ.

Елкĕреймерĕ. Мĕнле васкасан та кая юлчĕ чиперук.

Илчĕ. Кăпăшка тупан çине хучĕ. Сылтăм шĕвĕр пӳрнипе ачашласа та пăхрĕ. Анчах та туймарĕ уй илемĕ ăна. Юратупа çунан чун ăшшине...

Михайлова сумкăсене илчĕ те вахтăна анчĕ. Маруç акка хура пальто тăхăннă çынпа хĕрсе кайсах калаçса ларать.

- Хăçан пытараççĕ вара? - ыйтать вăл.

- Виçмине. Ачи Мускавран таврăниччен кĕтес тетпĕр, - хуравлать тăраканни.

Люда сывлăх сунса иртсе кайма тăчĕ.

- Мĕн ырри унта? - терĕ ватă ахлатса. - Ав, Иван Васильевич вилсе кайнă тет çĕркаç.

Хĕр сумкине хурса пĕлтерӳсем çакăнса тăракан вырăна пычĕ. Унта "Ай-бо-болит" сăн ӳкерчĕкĕ. Ĕнер çеç тепре курнăçса калаçнăччĕ-ха вĕсем. Паян вара... Юлашки хут пулчĕ апла.

- Мĕнле вилнĕ вара вăл? - калаçакансене чăрмантарчĕ Людмила Константиновна.

- Чĕре çумĕнчи ванчăкĕ тапраннă тет, - пĕлтерчĕ вахтер.

- Мĕнле ванчăк?

- Вăрçă, хĕрĕм, вăрçă ванчăкĕ. Вăл вĕт çамрăклах çапăçу хирне кĕрет. Брест сывăхĕнчи вăрмансенче. Ашшĕ чикĕре тăнă ун. Вăл вара, Василий Иванович, тăлăха юлнăскер партизана лекет. Унта вунтăватă çулхи каччă икĕ хутчен аманать. Пĕри, ав, ванчăкĕ, паянхи куна кĕтнĕ... - шăпланчĕ Маруç акка.

Людмила Константиновна шухăша путрĕ. Ăнланчĕ вăл. Тинех ăнкарчĕ Василий Иванович ăна, вунсакăр çулхи хĕре, мĕншĕн чунтан-вартан хĕрхеннине.

Люда хĕрелсе кайрĕ. Чуна такам кĕрсе кайнă та чĕрене хăйрать. Шеллемесĕр ваклать çамрăкăн пурнăç таппине. Ытти студентсемпе пĕрле профессора "Ай-бо-болит" тесе мăшкăланăшăн пăшăрханать. Çапла çав вăл, сынна пĕлсе çитмесĕр нихăçан та ан тăрăхла.

Хĕр йывăр туйăма пусарса сывпулашрĕ те сумкине илсе урама тухрĕ. Чĕнсе илнĕ такси çине ларчĕ. Машина хĕр шăпине шыраса малалла ыткăнчĕ.

6.

Канлĕн сывăрмарĕ Лидия Николаевна. Çĕрĕпе йăшăлтатса выртрĕ. Ыйхă килмерĕ. Кантăкран пыра-пыра шаккакан шухă çиле итлесе пăшăрханчĕ. Тем кĕтрĕ канăçа çухатнă амăшĕн чĕри: урам енчен пĕр-пĕр сас-чĕв илтĕннĕ-илтĕнмен çурăлса тухасла тапăртатрĕ - такам усал хыпар илсе килнĕн туйăнчĕ ăна. Лăпланма пĕлмерĕ.

Ир енне çеç шуралса кăвакарнă çÿç пайăркисем кăпăшка минтер çинче канăç тупрĕç. Тĕлĕрсе кайрĕ.

"...Амăшĕ килте. Пĕр-пĕччен. Женя, тăватă çулхи ача, урамра. Вăл вăйă вылять. Лидия Николаевна кантăка пырса уçрĕ те:

- Женя! - терĕ темшĕн пăлхануллă сасăпа. - Женя, ачам, кĕр!

- Анне! Манăн кĕме вăхăт çук! - кăшкăрчĕ чĕре тĕпренчĕкĕ.

- Кĕр, ачам. Эпĕ сана кĕнеке вуласа парăп. Юрататăн вĕт эсĕ кĕнеке вуланине итлеме! - ÿкĕтлерĕ Лидия Николаевна.

Ахаль чух хĕпĕртесех чупса кĕрекен ача паян кантăк сывăхне пычĕ те:

- Эпĕ çарçынни, - терĕ. - Патшалăха сыхлама каятăп.

- Ачам, эсĕ "океанолог" пулма ĕмĕтлентĕн-çке! - ÿкĕтлерĕ амăшĕ.

- Анне, ан çилен, вăхăт çук! Эс мана валли сухари хатĕрлесе хур. Ман кĕçех вăрçа каймалла! Ан ма-ан! - терĕ те аллинчи хĕçĕпе курăнман тăшмансене хире-хире чупса кайрĕ. Куçран çухалчĕ...

Амăшĕн чĕри ывăлне мĕнле чĕнсен те, леш таврăнмарĕ...

- Анне, анне тетĕп, - хулран силлесе вăратрĕ сывăха пырса тăнă яштака пÿллĕ хĕрĕ Таня. - Эс мана хăратсах пăрахрăн.

- Тĕлĕкпе атапрăм пуль ĕнтĕ, - лăпкăн хуравларĕ амăшĕ, çумне ларнă хĕрĕн чĕрçи çине аллине хурса.

Таня ăна хăйĕн çепĕç аллисемпе ăшшăн пăчăртарĕ.

- Каллех Женьăна асăнса выртрăн.

- Чĕнеп, чĕнеп. Киле кĕмест. Вăрçа каятăп тет. Сухари хатĕрлеме хушать. Ырра мар пуль ку, - терĕ те сивĕннĕ аллисемпе йĕпеннĕ куçĕсене шăлса илчĕ:

- Ан йĕр, анне. Йĕркеллех таврăнĕ акă. Эй, тăмсай, - терĕ те хĕрĕ хăй сывăракан пÿлĕме чупса кайрĕ. - Ак, анне. Мансах кайнă. Енер илтĕм, - амăшĕн аллине çыру тыттарчĕ.

- Аçунтан-и? Хăçан килет вара вăл командировкăран?

- Çук. Женьăран вăл.

Лидия Николаевнăн чĕри лăпланчĕ. Тăрса ларчĕ.

- Вула-ха апла, - терĕ. - Тĕксĕм кунта, куç курмасть.

"...Эпĕ лайăх полка лекрĕм. Кунта пурте пур: клуб, магазин, спорт площадки, столовăйра тăраниччен çитереççĕ, - васкаса вуларĕ хĕрĕ амăшĕн чĕрине лăплантарас тесе, - çанталăк ăшă тăрать... Йĕри-тавра тусем, çӳлте юр выртать. Тусем хушшинче айлăм вырăнсем те сахал мар, вĕсене кунта "зеленка" теççĕ. Унта авалхи кишлаксем, тăмран тунă çуртсенче дехкансем пурăнаççĕ... Аннеçĕм, эсĕ вĕçĕмсĕр манăн сывлăх пирки пăшăрханатăн. Хуйхăрма та, пăлханма та кирлĕ мар - эпĕ лайăх сывлăхпа çӳретĕп. Хăвăр ан чирлĕр. Сывă пурăнăр. Таня, эсĕ тата лайăхрах вĕрен, аннене яланах итле, пулăш. Вăл пирĕн пĕрре çеç..."

- Хăçан çырнă вара? - кăсăкланчĕ Лидия Николаевна çыру патне аллине тăсса.

- Январĕн вунпĕрмĕшĕ, 1988 çул, - терĕ вылявчăк туйăмпа Таня.

- Паян вара?

- Паян çирĕм улттăмĕшĕ. Вунпилĕк кун килнĕ, анне.

- Çирĕм улттăмĕшĕ...

- Çапла, аннеçĕм, паян пичче вунтăххăр тултарать, - хĕр амăшне питĕнчен чуптуса илчĕ те пăчăртарĕ. - Пăшăрханни кăлăхах. Куратăн вĕт - йăлт йĕркеллĕ. Атя, тăрар...

Сĕтел хушшинче вĕсем калаçăва малалла тăсрĕç.

- Анне, Сăкăтри Верук аппана пĕлетĕн вĕт-ха, - терĕ хĕрĕ.

- Ну, пĕлетĕп. Вилнĕ çынпа мĕн тăватăн эс? - тĕлĕнчĕ амăшĕ.

- Унăн хĕрне, Людăна, пĕркун тĕл пултăм. Вокзалта, - калам-ши, калам мар-ши тенĕн Таня амăшĕнчен хăмăр куçĕсене тартса пуçне стена çинчи сехет енне пăрчĕ.

- Вара, - малалла каласса кĕтрĕ Лидия Николаевна.

- Вăл... вăл, - тăсрĕ сăмаха хĕрĕ.

- Мĕскер вăл? - чăтăмлăха çухата пуçларĕ амăшĕ. - Каласа пĕтер ĕнтĕ.

- Вăл Афганистана кайрĕ.

- Салтака-и? - тĕлĕнчĕ хĕрарăм.

Лидия Николаевнăн аллинчи çăкри сĕтел çине тухса ÿкрĕ. Куçĕсем шывланчĕç.

- Ăна тата, тăлăха, кунта мĕскер çитмен-ши, - чунĕ ыратнăран вăрçса илчĕ амăшĕ кÿршĕ хĕрне. - Ларасчĕ килте. Шупашкарта мĕн, ĕç çук-и? Салтак - хĕр валли мар вăл.

Таня пуçне усса хăйне хăй тарăхса ларчĕ. Чĕлхине вăхăтлă тытса чарманран ÿкĕнчĕ.

- Анне, - лăплантарасшăн пулчĕ вăл. - Людмила - медсестра. Госпитальте ĕçлет.

Сĕтел хушшинчен тухса амăшĕ патне пычĕ. Пуçне çупăрларĕ.

- Анне, аннеçĕм, Людмила - Женьăн хĕрĕ. Вăл пиччешĕн унта тухса кайрĕ.

- Пиччешĕн... - тĕлĕннипе калас сăмах каялла çăтăнчĕ, çиеле тухмарĕ.

- Çапла. Баграма е Джабаль-ус-Сираджа яма ыйтатăп терĕ. Пичче патне.

Амăшĕ хĕрне, пĕртен-пĕр çумри шанчăкне вĕçертес мар тесе хытă-хытă пăчăртарĕ те шалтан капланса килекен туйăма чараймасăр саманана ылхана-ылхана йĕчĕ...

## 7.

Чарнистака кайса килнĕ хыççăн разведротăн канма вăхăт пулмарĕ: икĕ хутчен рейда тухрĕç, засадăра ларчĕç, хĕçпăшаллă каравансене, наркăмăш тĕплерĕç. Мамук Абу-Хана, суранланнăскере, тĕттĕм ту çурăкĕнчен сĕтĕрсе кăларса Кабула ăсатрĕç. Хăйсем виçĕ хутчен духсем хатĕрлесе хунă капкăна çакланчĕç. Телее, çухатусем урăх пулмарĕç.

Трилинский БМПна чарчĕ те строй умĕнче çамрăк салтаксене вăрçса тăракан капитана сăнарĕ: çÿллĕ вăл,

кĕрнеклĕ, калаçнă чух кăшт курпунне кăларма юрататъ. Халĕ те ак пĕкĕрĕлерех тăрса ятлаçатъ.

- Миçе хутчен каламалла сире! Салтак таса çӳремелле тесе. Ăçта сан çуху? Ма çĕлемен? Пилĕк минут сана! Марш кунтан! - хăвалать вăл çамрăка.

- Сержант! - тин çеç вĕренсе килнĕ кĕçĕн командира чĕнчĕ. - Тĕрĕсленĕ пултăр. Каçпа систерен. Асту мана! - юнать вăл пӳрнипе.

- Капитан юлташ! - пӳлчĕ "духсене"* вăрçса тăракан командира Трилинский.

- Мĕскер ыратать сан унта? - водитель енне утса кайрĕ Шавлай.

- Ара, эсир вăрçса тăнине пăхатăп-пăхатăп та тĕлĕнетĕп, - терĕ салтак.

- Мĕн тĕлĕнмелли, эсреметсем Ярусов аллине çакланнă, - терĕ капитан куççене чарса. - Ята яраççĕ, "кăйкăрсен" ятне.

Шавлай БМП çине улăхса ларчĕ. Кĕсйинчен "Охотник" кăларчĕ те тивертсе ячĕ.

- Капитан юлташ, - хăпмарĕ унран водитель.

- Мĕн тата? - тарăн сăвăрса илнĕ май салтак çине пăхрĕ лешĕ.

- Пĕлетĕр-и эсир мĕншĕн ялан вăрçăннине? - ыйтрĕ Трилинский.

- Ну, - терĕ мăкăрлантарса капитан.

- Сирĕн хушаматăрта турри çырса хунă ăна.

- Ăнланмарăм...

- Ара, Шавлай сăмаха чăвашларан вырăсла куçарсан "шуми" пулать.

Броня çинче итлесе ларакан ачасем пурте пĕр харăс аслати кĕмсĕртетнĕн кулса ячĕç.

- Час "шуми" туса илетĕп ак, - терĕ те сылтăм хул çинчи автомата хурса Трилинские хăмсарса илчĕ Шавлай.

- Юрĕ... юрĕ... юрĕ... - парăнамçи турĕ салтак. - Эп шăл йĕрсе çеç вĕт.

---

*Духсем - çамрăк салтаксем.

- Ţо-тă, хускат, - терĕ.
- Ăçта каятпăр вара эпир паян? - ыйтрĕ Женя.
- Сан валли ханума* шырама! - патлаттарчĕ капитан хăйне сăмахпа текнĕрен.
- Мана ханумсем кирлĕ мар. Пирĕн тăрăхри хĕрсем вĕсенчен пĕртте кая мар. Ирттерессĕ те, - çĕнĕ машинăна чĕртнĕ май пакăлтатрĕ Трилинский.
- Вĕсем кая мар пуль те, анчах та - аякра. Кусем вара, шур акăшсем, хамăр полкрах пулассĕ, - шăл йĕрчĕ капитан каччăн чунне кăтăкласа.
- А-а-а, медсестрасене илме каятпăр-и? - полкра çӳрекен сас-хурана аса илсе калаçрĕ Женя.
- Çавсене, - çирĕплетрĕ командир, - Вĕçтертĕмĕр.
БМПсем майĕпен, васкамасăр аслă çул çине тухрĕç те "Урал" колоннине хуса иртсе Баграма çул тытрĕç. Çул ик айккипе çӳллĕ, яштака тирексем хушшинче тĕрлĕ вăхăтра çунса кайнă техника вĕлтлете-вĕлтлете юлать. Разведчиксене асăрханма хушать.

Çул ăнса пычĕ. Баграма çитиччен никам чăрмантармарĕ вĕсене. Тĕлĕнмелле!
- Духсем Пакистана тарса пĕтмерĕç пуль те Серужа курсан, - терĕ Гена Баграма çитсен çамрăк салтак çине пăхса.
Леш хулăм тути айĕнчен ылтăн шăлне кăтартса илчĕ.
- Кĕтме пулать. Кун пек паттăрсенчен такам та хăрĕ, - пурте иртнĕ эрнери камите аса илсе кулчĕç.
Пострa тăнă чухне Сергей Воронов тĕлĕрсе кайнă. Ыйхи тутлă пулнă-и, пĕлместпĕр. Анчах та кӳршĕри кишлакра ашак кăшкăрма тытăнсан янк! сиксе тăрать те - шатăртаттарать. Пĕтĕм полк ура çине тăратать. Мĕскĕн, тăват уралла "духа" йĕре-йĕре кишлакĕпех пытарчĕç тет кайран.
- Ротный килет!
- Пĕчченех-и? - илтĕнчĕ БМП ăшĕнчен.
- Медсестрасем ăçта вара?

*Ханума - арăм.

- Вёсем БТРпа пыраҫҫӗ, - терӗ командир аякри КПП умӗнче тӑракан "восьмидесятка" БТР енне сӗлтсе.

- Ах, - терӗ мина ванчӑкӗпе салатнӑ сӑмсине сӑтӑрса. Хӗрлӗ ҫӑлтӑр кавалерӗ Миша Попков. - Ҫук иккен телейӗм. Паллашаймарӑм.

- Союзрисене кама валли хӑваран? - ыйтрӗ Гена.

- Сана валли, - юлмарӗ лешӗ.

- Ҫитет елпӗрме! - хушрӗ Шавлай. - Сӗкӗнсе ҫеҫ пӑхӑр - кӑтартатӑп вара.

Ачасен куҫӗ умӗнче пысӑк чӑмӑркка ташласа илчӗ.

- Капитан юлташ, миҫен ара вӗсем? - ыйтма хӑйрӗ сарӑ ҫӳҫне ачашласа Попков.

- Иккӗн.

- Ҫамрӑк-и ара вӗсем?

- Ҫук, ҫитмӗл ҫиччӗре! - патлаттарчӗ Петр Шавлай.

БМП ҫине улӑхрӗ те:

- Трилинский ӑҫта! - терӗ хулӑм сассине ӳстерсе.

- Унӑн ыран ҫуралнӑ кунӗ, капитан юлташ, - хутне кӗчӗҫ салтаксем. - Сорокинпа дивизи магазинне кайрӗҫ.

- Ав, чупаҫҫӗ вӗсем! - илтӗнчӗ сасӑ.

Ҫывӑхри модульсем хушшинчен икӗ салтак чупса тухрӗ. Аллисенчи курупкине ӳкерме шикленсе лӗпсӗртетрӗҫ вӗсем.

- Хӑвӑртрах! - кӑшкӑрчӗ командир. - Телейне ҫухататӑн!

- Пирӗн телей хамӑрпа, - терӗ те, Женя хыҫҫӑн кӑкӑрне шаккаса илчӗ, курупкӑна машина ҫинчи ачасене тыттарнӑ.

- Темле ҫав, темле, - иккӗленчӗ капитан. - Санпа ентеш паллашасшӑн. Эс пур таҫта ҫӳретӗн.

- Мӗнле ентеш тата? - тӗлӗнчӗ каччӑ.

- Чӑвашран пӗри, - терӗ те умри БТР енне сӗлтрӗ.

- Кам, Петр Моисеевич, - тӗлӗнчӗ чӑваш каччи ырӑ хыпар илтсе.

- Медсестра.

Женя ума пӑхрӗ: БТР КППран тухса Джабаль енне ҫул тытрӗ. "Кам-ши вӑл?" - вӗлтлетрӗ пуҫра шухӑш. Чӗре ырра кӗтсе тапӑртата-тапӑртата илчӗ.

- Кайрăмăр, - илтĕнчĕ сасă шухăша пÿлсе.

...Трилинский машинине парка лартрĕ те казарма енне утрĕ.

Çанталăк сулхăн пулин те ырă. Тÿпере çăлтăрсем мĕлтле-те-мĕлтлете куç хĕсеççĕ. Çамрăкăн чунне илĕртеççĕ. Шухăшсене пăтрата-пăтрата аякка-аякка çитереççĕ. Тăван ен, ачалăха илсе кĕреççĕ. Килтисемпе, савнипе пĕрле çÿреттеççĕ.

...Вунă класс пĕтерсен Женя Ленинградри гидрометеорологи институтĕнчи океанологи факультетне вĕренме кĕме хăтланса пăхрĕ. Анчах та, конкурс витĕр тухайманнипе, Шупашкара каялла таврăнма тиврĕ. Ытти ВУЗсем пирки калаçасшăн та пулмарĕ вăл.

- Килес çул та вăхăт пур, - терĕ çеç.

Приборсем кăларакан завода вырнаçрĕ. Ирхине - ĕçе. Каçсерен вара медучилищăна вĕренме кĕнĕ Людмилăпа пĕрле хула тăрăх çÿререĕç. Алла-аллăн, тÿпери çăлтăрсене кĕвĕçтерсе.

- Ÿкĕнместĕн-и вĕренме кĕрейменшĕн? - сĕртĕнчĕ икĕ янкăр кăвак тÿпе ванчăкĕсене каçхи çутăран каччăн кăкри çинче пытарса хĕр.

- Çук. Мĕншĕн вара манăн ÿкенес? Килес çул та вăхăт пур. Çулталăк хушшинче лайăхрах хатĕрленĕп. Тата, çитменнине, сансăр унта çунсах вилĕттĕм, - терĕ Женя пикене пуçĕнчен ачашласа. - Тен, пĕрлешĕпĕр, Людмила?

Хĕр чĕри яш! турĕ. Кĕтмен калаçу çÿçентерсе илчĕ. Хуравлама хăймасăр тÿпене пăхрĕ те:

- Атя хамăр валли çăлтăрсем суйлатпăр, - чĕвĕлтетрĕ хĕр. - Кашни çыннăн хăйĕн шăпин çăлтăрĕ пур тет. Мĕнле шутлатăн, тĕрĕсех-ши вăл?

- Людмила, - илтмерĕ каччăн сăмахне хĕр, те пăшăрханса, те иккĕленсе калаçрĕ те калаçрĕ.

- Атя эпир те хамăр шăпа çутине суйлатпăр. Иксĕмĕрĕнне. Вăл урăх никамăн та ан пултăр - иксĕмĕрĕн çеç.

- Эпĕ суйларăм ĕнтĕ, чунăмçăм, - хĕре калаçма чарса чуптуса илчĕ. - Мĕнле, пĕрлешĕпĕр-и вара?

- Пĕлместĕп, - терĕ те Людмила Женьăн тарăн кусĕсенче суя мар-ши тенĕн чăнлăх шырарĕ. - Халех пĕрлешсен ваттисем мĕн калĕç.

...Пушанса тăрса юлнă кĕрхи Атăл каччăпа хĕре витлешнĕн касхи сĕмлĕхре чăпăлт! чăпăлт! туса хыçран пăхса юлчĕ...

Шавлай сăмахĕсем Трилинскине тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерчĕç. Чăваш хĕрĕ - Афганистанра. Пушанса юлнă уй-хирти чечек евĕр, пĕр-пĕччен, хăрамасăр, çич юта персе çитнĕ вăл. Мĕн илсе килнĕ-ши ăна кунта: юрату, тивĕç, укçа - каччă хурав тупаймарĕ. Юрĕ, ыран, хăй çуралнă кун тĕл пулса унпа, тăван ен çырлипе, шăкăл-шăкăл калаçĕ. Мĕн кирлине ыйтса пĕлĕ. Тунсăхланă чуна чăвашла калаçса йăпатĕ.

"Ăçтисем-ши вăл? Шупашкартанах-ши? Е пĕр-пĕр районтан? - канăç памарĕç вăхăтаваскатса шухăшсем. Куç умне каллех Люда тухрĕ. - Эх, тĕл пуласчĕ сана халĕ. Пĕр самантлăха çеç, чунăмри чечекĕм", - сасăпах персе ячĕ каччă.

- Кампа калаçатăн? - илтĕнчĕ çумра.

- Хампа хам, - кулса илчĕ вăл Сорокин çине пăхса. - Йўтерĕм пуль.

- Мĕн, чиперук патĕнчен килместĕн пулĕ те? - иккĕленсе ыйтрĕ Гена.

- Çук. Унпа ыран паллашăпăр, - казарма енне утрĕ. - Эс мĕншĕн çывăрмастăн вара?

- Ыйхă килмест-ха, - сигарет тивертсе ячĕ юлташĕ. - Ыран шашлăк тăватпăр-и ара?

- Темле çав, - хулне сиктерчĕ чăваш каччи. - Аш-какай ăçтан тупăпăр.

- Ротный Гульбахар енче пĕр кĕтўçĕпе калаçса татăлтăм

терӗ. Мана ҫӑлакана бакшиш терӗ, - мухтанчӗ Сорокин тӗтӗмпе чыхӑна-чыхӑна.

- Аван апла.

- Медсестрасене те чӗнетпӗр терӗ. - чышса илчӗ юлташӗ кӗвӗҫнӗн. - Сана валли чи пысӑк парне тет.

- Ман парне Шупашкарта, - терӗ те чӑваш каччи казармӑна кӗрсе ҫухалчӗ.

Тӳрех ҫывӑрса каяймарӗ Трилинский. Тӗрлӗ шухӑш пуҫа кӗчӗ. Амӑшне, аппӗне, йӑмӑкне аса илчӗ вӑл. Люда та, леш медсестра вырӑнӗнче пулса полка ҫитнӗн туйӑнчӗ ӑна. Хӑй вара служба пӗтернӗ те Атӑл хӗрринче ҫӳрет. Такама шырать. Леш ҫук. Килмен яланхи вырӑна. Ӑҫташи вӑл, ӑҫта? "Ҫарта", - илтӗнчӗ сасӑ таҫтан аякран. Пӑхрӗ - кукашшӗ иккен. "Ачам, - тет, - Люда салтака кайрӗ. Атя манпа, атя хӑвӑртрах. Сана унта кӗтеҫҫӗ". Качча аллинчен тытрӗ те хӑйпе пӗрле ҫӳле-ҫӳле илсе хӑпарчӗ. Унччен те пулмарӗ, кӑнтӑртан хаяр ҫил хӑпарчӗ, ҫиҫӗм ҫиҫрӗ, аслати кӗмсӗртетрӗ. Женя кукашшӗне ҫухатрӗ. Ҫӗре ӳкрӗ.

...Чӑл-пар! турӗҫ кантӑксем.

- Духсем! Тревога! - янӑрарӗ сиренӑран та хӑватлӑ дневальнӑй сасси. - Боевая тревога!

Салтаксем пӗрин-хыҫҫӑн тепри ҫывӑхри оружейкӑран автомат, пулемет, гранатомет, винтовка иле-иле казармӑран вирхӗнсе тухрӗҫ. Паркри машинӑсем патне ҫурӑлакан минӑсемпе снарядсенчен сыхланса ҫӗлен ҫулӗпе пынӑн пӑркалана-пӑркалана чупрӗҫ. Женя та вӗсенчен юлмарӗ. Парка кӗрсе БМП ӑшне кӗрсе ларчӗ, хускатса ҫул ҫине тухрӗ.

- Арт-склад патне, - хушрӗ Шавлай салтаксене. - Унтан кӗреҫҫӗ духсем.

БМПсем патне Вова Поляков чупса пычӗ.

- Эсӗ ӑҫта тата? - ыйтрӗ унран ротный.

- Эпӗ те пыратӑп! - кӑшкӑрчӗ вӑл машина ҫине улӑхса. - Дембель тармасть.

- Пыратӑнах пулсан апла Трилинский машини ҫине лар та сылтӑмри фланга хутӗлӗр. Эпир сулахаялла.

- Тепӗр енчен вара?

- Унта - пехота.

Машинăсем кӗрлесе илчӗç те тăхлан çумăрне хирсе малалла ыткăнчӗç. Арт-склад çывăхне çитеспе колоннă пӗр рете тăрса тухрӗ. Разведчиксем БМПсенчен тухса хыçран персе пычӗç. Духсене "зеленка" енне каялла хирчӗç. Унтан та кунтан. "Аллах акбар! Шурави, парăнăр!" - тени илтӗнет. Вӗсене пӳлсе салтаксем çичӗ хутлă сăмахсем хирӗç шатлаттараççӗ. "...ме тыт", - теççӗ те хӗç-пăшалӗсенчен вут-çулăмпа çулаççӗ. Ырми-канми. Вăрçа-вăрçа.

- Окопсем патнерех çитме тăрăш, - илтӗнчӗ çумри люкран персе пыракан сержант сасси. - Вӗсене каялла илмелле пирӗн. Унсăрăн арт-склада сирпӗтме пултараççӗ вӗсем.

- Юрӗ, - терӗ те Женя умри окопра хуçаланакан духсене хăй айне турӗ. Пӗр вырăнта çаврăнчӗ. Траншея енне çул тытрӗ. Анчах та аякка каяймарӗ вăл: кӗрӗс! турӗ гусеница айӗнче. БМПна вут хыпрӗ.

- Машина патне! - илтрӗ вăл Поляков сассине.

Автомата илсе вӗсем çумри окопа тухса выртрӗç. Гена Сорокин çеç васкамарӗ-ха. Тупăран хăйсем çине тапăнакан духсене печӗ. Ана курсан Женя каялла чăмрӗ, вут сӳнтермеллине илчӗ те çулăма кăпăк айне турӗ.

- Кун пек аванрах, - терӗ шăл йӗрсе Гена. - Окопа кай. Тепре шаплаттариччен.

Женя хыçалти алăкран тухса окопа кӗрсе выртрӗ. Ытти салтаксемпе пӗрле чӗнмен хăнасене тăхлан пӗрчисем парнелерӗ.

Кисренет Чардехи. Пуçа йăтма та çук. Пульăсем унта та кунта пыра-пыра выртаççӗ. Çумри чулсене леке-леке уçлăхран килекен шурăмпуçне тăрăнаççӗ. Тупписем те юлмаççӗ вӗсенчен, чăрсăррăн сывлăша çурса алхасаççӗ.

- Духсем сулахайри... - вӗçлесе пӗтереймерӗ сăмахне Вова Поляков. Каçăрăлса илчӗ, аллине усрӗ, тайăнчӗ. Ура айне перекен автоматне вӗçертмесӗр аялалла тӗшӗрӗлчӗ. Вилчӗ. Пульă тăнлавран çакланнă.

Çакна курса тăракан Женя окоп тепӗр енне чупса пычӗ.

Сержанта йатма пикенчĕ. Анчах та сулахайри лини витĕр каçнă духсем ăна чăрмантарчĕç: шик! шик! шăхăрчĕ хăлха патĕнче вилĕм кайăкĕ, çăт! çат! туса тăпрана пырса перĕнчĕ. Айккинелле тапса сикрĕ. Граната илсе дух енне ывăтрĕ: кĕрс! турĕ хура сухала окопа ывăтса.

- Ачасем! - кăшкăрчĕ Трилинский, - сержанта вĕлерчĕç! Духсем сулахайра! Хÿтĕлĕр мана!

Окопран тухса çумри БМП айне кĕрсе выртрĕ. Хирĕнекен тăшмансене пере-пере ÿкерчĕ те çывăхри дзот енне ыткăнчĕ. Пĕччен мар иккен вăл. Ун хыççăн ыттисем пыраççĕ.

...Кăкăра пĕçерсе илчĕ. Сывлăш пÿлĕнчĕ. Ура айĕнчи çĕр, яланах тĕреклĕ те тăп-тăп тăраканскер, чалăшса кайрĕ. Ун-кун пăтранчĕ те пуçран пырса çапрĕ. Ӳкрĕ салтак. Ăнланмасăр. Çемçе çĕр çине. Тавра шăпланчĕ. Хаяр çапăçу пымасть те тейĕн.

Кĕвĕ çеç хăлхара янăрать. Чуна ăшăтса уçлăхри хĕлхем витĕр тухакан çепĕç те ырă çемĕ. Женя патне вăл ялкăшса-ялкăшса хумăн-хумăн вĕçсе килет те аякка-аякка кайса çухалать. Таврăнать. Çĕнĕ вăйпа, çĕнĕ витĕмпе таврана çутатать, сĕрлет. Канлĕхе пăсса кисренет. Çук, кĕвĕ çеç мар. Юрă илтĕнет тĕпсĕр тĕменрен. Тăван ене, уй-хирсене, Атăла аса илтерекен кĕвĕ. Кам юрлать-ши ăна? Кам? Куçне уçрĕ. Кăйкăр! Икĕ пĕчĕк янкăр тÿпе ванчăкĕсем çинче вĕлкĕше-вĕлкĕше çĕнĕ юрă, çĕнĕ кун юрри шăратнăн туйăнать ăна, чăваш ачине

Икĕ çепĕç, кăпăшка алăсем пуçа йатса кăкăр çумне пăчăртарĕç. Ăшă. Канлĕ. Шăп. Уçлăхри кăйкăр çеç шăплăха пăсмаименсе юрă юрлать. Аякран-аякран, ачалăхран, илсе килнĕ çемĕ кассăн-кассăн пырса суранланнă чуна лăпкать. Ачашлать. Ырми-канми:

*Уçлăхри хупăлча уçăлса хупăнсан,*
*Шуралса килекен çутă кун ĕмĕлкки*
*Пурăнма йыхăрса, вăратса ыйхăран*
*Ыйхăри таврана парнелет чун ĕлкки.*
*Улахри çăтмаха тав туса кăмăлтан*

*Уläхри чечеке çупäрлать куп юрри.*
*Шурäмпуçё килсеп, сар хёвелё тухсан*
*Вäй кёрет, вäй илет ырä кунäн кёлли...*

* * *

Александров шäпланчё.

Шухä çил кассäн-кассäн пырса çан-çурäмсене çÿçентере-çÿçентере çири кёпесене тäпаларё, яш-ёмёрён шäпи сарäмсäр вёçленнине ёненесшён пулмарё курäнать. Кäкäра кёрсе унти туйäмсене сапала-сапала тустарчё.

-Çапла, Ефим, эпё хäть киле çитсе куртäм, -тарäн сывласа илчё Женя, -Ман аташäм вара...

-Эс мён, вилме хатёрленмерён пуль те? - тусäм сäмахё-сенчен хäраса ыйтрäм.

-Темле çав. Вилес килмест паллах. Анчах чёре çумёнчи тимёр çулталäк хушшинче икё миллиметр куçнä. Тата тепёр виççё çеç юлать - çулталäка, - терё те мана çурäмран лäпкаса илчё. -Атя таврäнар.

Килнё çулпа каялла васкамасäр пытäмäр. Пуçра явäнакан шухäшсем çиеле тухайманшäн тарäхса чёрене пусмäрларёç. Сывлама йывäрлатса кäкäра хёстерчёç.

Çакäн пек керменсем тäвакансем хäçан та пулин асäнёç-ши Трилинский çинчен. Пёлёç-ши унäн ёмёчёсемпе шухäш-ёсене? Чухлёç-ши? Паян калама та хён. ... Мёншён, камшäн, кам чапёпе мухтавёшён пуçне хучё пулать-ха таса чун-чёреллё, пысäк ёмётлё маттур чäваш каччи Женя Трилинский? Тусäм ун пурнäçёпе паттäр вилёмё çинчен каласа пани пётём чун-чёрене пäлхантарса ячё. Хама тепёр хут Афганистан вутёнче çуннä пек туйрäм...

-Анне, äçта çÿретён вара эсё паян. Сана шыраса чун тухрё, - илтёнчё шухäшсене çурса тин çеç çул хёррине çитсе чарäннä УАЗ машинäран янäравлä сасä.

-Мана мён шырамалли пур. Каларäм вёт-ха сана, - хёрёх-аллäсенчи хёрарäма хäйне шыраса çÿрени килёшмерё курä-нать, - ывäл патне çитсе килетёп тесе.Масарё çинче пултäм, кайран тата ун урамне те çитсе килес терём...

-Атя, ларсам, киле кайса килетпёр, - терё те хёрё, маши-нан хыçалти алäкне уçрё.

Хĕрарăм машинăн салонне ларма пикенсе сылтăм урине йăтрĕ, анчах та - те пускăчĕ йĕперен, те ура вăйĕ хавшакран - каялла сулăнса кайрĕ. Сулахай аллине йăтса асфальт хĕрринчи лакăм çине тайăлса кайрĕ. Ярт! тапса сикрĕ те Женя хĕрарăма хулĕнчен ярса тытрĕ, ӳкме памарĕ. Çавăтса машина ăшне кĕртсе лартрĕ.

-Тавтапуç сана, çамрăк çыннăм, -терĕ хĕрарăм каччăна, пулăшнăшăн ыр сунса.

Машина асфальт хĕрринчи тусана вĕлкĕштерсе малалла ыткăнчĕ. Пĕр кана ун çине пăхса тăнă хыççăн Женя ман пата пычĕ те:

-Пĕлетĕн-и, Ефим, вăл кам иккенне? - тесе ыйтрĕ.

-Курнăччĕ паян. Масар çинче, - терĕм куçран çухалнă машина енне пăхса.

-Вăл - Лидия Николаевна Трилинская.

-Женя амăшĕ-и? - тĕлĕнтĕм эпĕ.

-Çапла. Кашни вырсарникун хĕлне-çăвне пĕлмесĕр, юрнеçумăрне пăхмасăр ывăлĕ патне çӳрет вăл. Акă паян та больницăран ир-ирех ыйтса кайрĕ тет. «Мана унта ывăлăм кĕтет», - тесе каланă тухтăра. Пĕр пульницара выртатпăр. Ывăлĕ çапла çĕре кĕнĕ хыççăн час-час чĕрепе аптрать. Ăнланатăн-и: миçе çул иртнĕ ĕнтĕ Женя пуç хунăранпа. Вăл çаплах: «Ывăлăм кĕтет».

-Тĕрĕсех пуль çав, пĕр аннесемшĕн çеç эпир яланах сывă. Аннесем çеç яланах кĕтеççĕ.

Çанталăк тĕттĕмлене пуçларĕ. Каçхи сывлăм курăксене ырлăх кӳрсе çепĕççĕн пырса çупăрларĕ те ирччен канма выртрĕ. Ырă, канлĕ урамра. Уйрăлас та килмест. Анчах та:

-Тур пулăшсан, тен, татах та тĕл пулăпăр-ха, - терĕ Женя пăлханнине палăртмасăр, ыталаса илчĕ.

-Шанатăп. Пĕрре çеç мар - çĕр хут та курнăçăпăр-ха. Трилинский урамĕнче хамăр валли чаплă çуртсем те купаласа лартăпăр ак. Вара кăтартăпăр «душмансем» еплереххине, - шӳтлеме пăхрăм эпĕ. Тусăм та мана аван ăнланчĕ, шӳте тăсса

-Есть, «душман» юлташ! - терĕ те чыс парса ярт! çаврăнчĕ. Стройри салтак утăмĕсемпе пульница еннелле утса кайрĕ.

2000.